ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛĔШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Декабрь 16 юннун № 245 (9154)
Хакĕ 20 пус.
36-мĕш çул тухать.

Паянхи номерте:

Хуçалăхпа культура строительствинчи çĕнĕ çитĕнÿсемшĕн

Декабрĕн 11-мĕшĕпе 12-мĕшĕнче Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕ пулса иртрĕ. Сесси РСФСР Министрĕсен Совечĕ «Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн ĕçĕсем çинчен» йышăннă постановлене сÿтсе явре тата Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕсене çирĕплетес ыйтăва пăхса тухрĕ.

Чăваш республикинчи ĕççыннисем, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, Совет правительстви тата аслă вырăс халăхĕ куллен-кун пулăшнипе, хуçалăхпа культура строительствинче чылай çитĕнÿсем тума пултарчĕç.

Республикăри ĕççыннисем партипе правительство вĕсем умне тăратнă пысăк задачăсене вăхăтра тата кирлĕ пек пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăйа хурса кĕрешме хатĕр пулнине кăтартаççĕ. Чылай предприятисен коллективĕсем çулталăкри производство планĕсене ирттерсе тултараççĕ, колхозсемпе колхозниксем государствăна ял хуçалăх продукчĕсем памалли обязательствăсене срокчен пурнăçлаççĕ.

Халăх хуçалăхĕпе культурăна ытларах аталантарма пирĕн республикăра пысăк майсем пур. Пысăк тухăçлă тырпул, пахча çимĕç, техникăлла культурăсем туса илме çĕр тата çанталăк условийĕсем лайăх, МТС-сем техникăпа пуян. Колхозсенче ĕç вăйĕ ытлашшипех пур. Выльăх-чĕрлĕх йышлă ĕрчетме, сад-сем нумай лартса ÿстерме, хăмла ытларах тума, хурт-хăмăр ĕрчетме пулать. Промышленноçа хăвăрт аталантарма республикăра чĕртавар тата ытти ресурссем çителĕклĕ. Анчах çак майсемпе промышленноçа вăйлатма тата ялхуçалăхне аталантарма халиччен начар усă курнă-ха.

РСФСР Министрĕсен Совечĕн постановленийĕнче Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ хуçалăхпа-культурăна аталантарас ĕçе çителĕксĕр ертсе пынине палăртнă. Пирĕн республикăн Министрĕсен Совечĕн ĕçне çапла хак панине Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ тĕрĕс тесе йышăнчĕ. Çавăнпа пĕрлех депутатсем Россия Федерацийĕн правительстви Чăваш республикинче хуçалăхпа культура строительствине малалла аталантарас тĕлĕшпе йышăннă мерăсене ырларĕç, вĕсене аслă вырăс халăхĕ чăваш ĕççыннисене конкретлă пулăшу пани пулать тесе йышăнчĕç.

Пирĕн республикăри совет органĕсемпе хуçалăх органĕсен ертсе пырас ĕçĕнчи тĕп çитменлĕх — вĕсем хăйсен ĕçне хальхи задачăсен çÿлĕшне çĕклеменнинче. Партин Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ пуланăранпа вăхăт чылай иртрĕ пулин те, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ хăйĕн ĕçне умра тăракан задачăсем хушнă пек улăхлатса çĕнетеймен, пленум палăртнă задачăсене пурнăçлама совет органĕсемпе ялхуçалăх органĕсене мобилизацилеме мерăсем йышăнман. Ялхуçалăх министерстви те, Вырăнти тата топливо промышленноçĕн министерстви те, Апат-çимĕç таварĕсен промышленность министерстви те, Суту-илÿ министерстви те хăйсене пăхăнса тăракан предприятисемпе организацисене ĕлĕкхи пекех, кивĕлле, çаврăнăçусăр ертсе пыраççĕ.

Ялхуçалăхне малалла аталантарса пырас ĕçе кирлĕ пек ертсе пыманни çак тĕслĕхсенчен те курăнать: республикăри хăшпĕр колхозсем пысăк тухăçлă тырпул туса илнĕ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ирттерсе тултарнă вăхăтрах, нумай колхозсенче тырпул тухăçлăхĕ пĕчĕк, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли план тулса пымасть, техникăлла культурăсем сахал акса тăваççĕ, колхозсен хуçалăхĕсене нумай отраслĕ тăвасси начар пурнăçланса пырать. Колхозсемпе МТС-сенче ĕçлеме ялхуçалăх специалисчĕсем, инженерсемпе техниксем, квалификациллĕ трактористсемпе комбайнерсем суйласа илсе, вĕсене ĕçлеме ярассине халиччен те пурнăçласа çитермен. Чылай колхозсенче общественнăйлла выльăх-чĕрлĕх валли витесем çитмеççĕ, выльăх апачĕ кирлĕ чухлĕ хатĕрлесе хуман.

Нумай предприятисемпе артельсен руководителĕсем вырăнти ресурссемпе ытларах усă курма тăрăшмаççĕ, чĕртавар уйăрса парассине кĕтсе лараççĕ, производство программисене тултарма, туса кăларакан продукци пахалăхне лайăхлатма, ассортиментне пысăклатма мерăсем йышăнмаççĕ. Вăрман промышленноçĕ начар ĕçлет.

Суту-илÿ ĕçĕнче те, культура строительствинче те, социальнă-культурăлла ĕçсене пурнăçлассинче те çитменлĕхсем нумай-ха.

Çакăн пек çитменлĕхсен сăлтавĕ мĕнре?

Республикăри совет органĕсемпе ялхуçалăх органĕсен ертсе пыракан работникĕсем колхозсен тата МТС-сен экономикине тĕпчесе пĕлес, вĕсенчи ĕçсене организацилес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ, колхозсенчи ĕç дисциплинине çирĕплетме, çитменлĕхсене пĕтерме, ертсе пыракан кадрсене вĕрентсе ÿстерме, малта пыракан колхозсен опытне сарма, агротехникăн прогрессивлă меслечĕсене ĕçе кĕртсе пыма сахал тăрăшаççĕ.

Министрсен Совечĕ тĕрлĕ постановленисем нумай йышăнать, райисполкомсемпе машина-трактор станцийĕсене çине-çине телеграммăсем ярать, вĕсене хăтăртусем парать, анчах ĕçсем мĕнле пулса пынине куллен-кун тĕрĕслесе тăмасть. Хула тата район Советĕсен исполкомĕсем те çак канцелярилле-бюрократла меслетпе ытларах ĕçлеççĕ.

Хуçалăхпа культурăна аталантарас ĕçе ертсе пырассинчи тĕп çитменлĕхсенчен пĕри вăл — партипе совет органĕсем, уйрăмах Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ, хула тата район Советĕсен исполкомĕсем, партипе правительство постановленийĕсене пурнăçлама ĕççыннисен анлă массисене начар организацилесе пынинче.

Паянхи хаçатра РСФСР Министрĕсен Совечĕ «Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн ĕçĕсем çинчен» йышăннă постановлени тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ йышăннă постановлени пичетленет. Унта республикăри хуçалăхпа культурăна аталантарас ĕçри çитменлĕхсем, умра тăракан задачăсем çинчен тĕплĕн каласа панă.

Республика Министрĕсен Совечĕ Россия Федерацийĕн правительстви кăтартса панă çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерме мерăсем йышăнма тивĕçлĕ. Республикăри ĕççыннисене Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн тата партин Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн решенийĕсенчен тухса тăракан ĕçсене пурнăçлама, хуçалăха вăйлатас ĕçре республикăри лайăх майсемпе тата ресурссемпе туллин усă курма, ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тăвассишĕн кĕрешме организацилемелле Вырăнти Советсен, предприятисен, колхозсен, общественнăйла организацисен, учрежденисен руководителĕсен организаторла ĕçе вăйлатмалла.

Ялхуçалăхĕнче тырпул тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе малта пыракан агротехникăна, наука çитĕнĕвĕсене пур колхозсенче те ĕçе кĕртсе пымалла, малта пыракан колхозсен опытне анлă сармалла. Выльăх-чĕрлĕх йышне нумайлатас тата унăн тухăçлăхне ÿстерес ĕçе лайăхлатмалла. Техникăлла культурăсем, пахча çимĕç нумайрах акса тумалла, садсем, хурт-хăмăр нумайрах ĕрчетмелле, хăмла тата махорка тăвас ĕçсене анлă сармалла.

Сортлă вăрлăхсем акни, агротехникăна ĕçе кĕртсе пыни, ĕçсене вăхăтра туни, уй-хире тислĕк тата минераллă удобренисем нумайрах кăларни ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне нумай ÿстерме май панине яланах асра тытмалла. Сурăхсене хатĕрленес ĕçе вăйлатмалла.

Машина-трактор станцийĕсен тĕп задачи — колхозсенче ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ÿстерессишĕн, общественнăйлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плансене тултарассишĕн, çĕрĕçĕпе выльăх-чĕрлĕхĕн пĕтĕм продукцине тата таварлă продукцине нумайлатассишĕн кĕрешесси пулать. МТС-семпе колхозсенчи специалистсене ертсе пырас ĕçе вăйлатмалла. Пысăк квалификациллĕ механизаторсен кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлемелле. МТС-сенчи хальхи машинăсемпе усă курас ĕçе лайăхлатас пулать.

Вырăнти промышленноçпа кооперации промышленноçне аталантарма, уйрăмах кирпĕч, черепица, известь нумайрах тума вырăнти чĕртаварпа анлăн усă курассине йĕркелес пулать. Халăх хуçалăх планĕнче палăртнă çĕнĕ предприятисене вăхăтра лартма мерăсем йышăнмалла. Халăхăн йăлари ыйтăвĕсене тивĕçтерекен мастерскойсен шутне нумайлатмалла.

Вăрман промышленноçĕн кашни предприятийĕ йывăç касса хатĕрлемелли плана тултартăр тесен, вĕсенчи механизмсемпе туллин усă курмалла, рабочисем улшăнса тăрассине пĕтермелле, сезонра ĕçлекен рабочисем илмелли плана тултармалла, рабочисен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатас пулать.

Умра тăракан задачăсене ăнăçлă пурнăçласси республикăри ертсе пыракан органсемпе вырăнти Советсем хăйсен ĕçне хăвăртрах улăхлатса çĕнетнинчен килет. Ĕçе улăхлатса çĕнетмелле тени çакна пĕлтерет: организаторла ĕçе вăйлатмалла, кашни предприятипе колхоза вĕсен экономикине, вĕсенче ĕçсем мĕнле тăнине лайăх пĕлсе ертсе пымалла, кая юлнă предприятисемпе колхозсене малта пыракансемпе танлашма пулăшмалла, ĕççыннисен социализмла ăмăртăвне вăйлатмалла.

Вырăнти Советсен ĕçне активе, ĕççыннисен анлă массисене хутшăнтарас пулать. Массăсем хăйсем çĕршыв хуçисем пулнине туйса тăччăр. Вĕсем хуçалăхпа-политикăлла задачăсене пурнăçлассишĕн çине тăрса кĕрешчĕр.

Ĕççыннисен жалобисемпе сыракĕсене вăхăтра пăхса тухмалла. Вĕсен усăллă сĕнĕвĕсене тата наказĕсене пурнăçлама пур майсемпе те тăрăшас пулать.

Йышăннă решенисене пурнăçлас ĕçе организацилемелле, ĕçсем мĕнле пынине тăтăшах тĕрĕслесе, самокритикăпа критикăна анлă сарса пырса, ĕçри çитменлĕхсемпе чăрмавсене пĕтермелле.

Ĕççыннисен анлă массисене умра тăракан ĕçсене пурнăçлама мобилизацилесси, партипе совет органĕсен пурин ĕçсене те лайăхлатнипе, хуçалăхпа культура строительствине ертсе пырас ĕçри шайне ÿстернипе Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн тата КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн решенийĕсем пирĕн республика умне лартнă пур задачăсене те ăнăçлă пурнăçлама пултарăпăр.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ йышăннă постановлени

РСФСР Министрĕсен Совечĕ „Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн ĕçĕсем пирки“ йышăннă постановлени çинчен

РСФСР Министрĕсен Совечĕ «Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн ĕçĕсем пирки» йышăннă постановлени çинчен сÿтсе явса, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ çакна палăртать: Коммунистсен партийĕн наци политикине тĕрĕс пурнăçласа пынипе, Совет государствипе аслă вырăс халăхĕ куллен пулăшса тăнипе пула чăваш халăхĕ, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, Совет влаçĕ вăхăтĕнче хуçалăхпа культура строительствинче çитĕнÿсем чылай тума пултарчĕ. Вăрçă хыççăнхи çулсенче республикăри колхозсен общественнăйлла хуçалăхне малалла тĕреклетсе пынă, акмалли çĕр лаптăкне пысăклатнă, колхозсенче выльăх-чĕрлĕх йышне нумайлатнă, вырăнти промышленноçпа кооперации промышленноçĕ продукци туса кăларасси ÿснĕ, социально-культурăллă учрежденисен шучĕ нумайланса пынă.

Унпа пĕрлех Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ çакна та палăртать: республика халăх хуçалăхĕпе культурине татах та хăвăртрах аталантарма республикăра мĕнпур майсемпе усă курма Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ, министерствăсем, управленисем, ĕççынни депутачĕсен хула тата район Советĕсен исполкомĕсем тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ-ха.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ çапла шутлать: РСФСР Министрĕсен Совечĕ хуçалăхпа культура строительствине ертсе пырас енĕпе Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пуррине питех те тĕрĕс кăтартса панă тата республикăра хуçалăхпа культура строительствине аталантарас ĕçе Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çителĕксĕр ертсе пырать тесе йышăнчĕ.

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен йышăннă решение пурнăçлас тĕлĕшпе Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ хăйĕн ĕçне питех те вăраххăн улăхлатса çĕнетсе пынине тата вăл КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ палăртнă задачăсене пурнăçлама совет органĕсемпе ялхуçалăх органĕсене мобилизацилеме кирлĕ ĕçсене туманнине РСФСР Министрĕсен Совечĕ тĕрĕс палăртнă.

Çĕр тата çанталăк условийĕсем лайăх пулнипе, МТС-сенчи техникăпа, колхозсенче ĕç вăйĕ çителĕклĕ пулнипе Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ, Ялхуçалăх министерстви тата райисполкомсем ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне, выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерме тата колхозсемпе колхозниксен тупăшĕсене пысăклатма начар усă кураççĕ.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ, республикăн Ялхуçалăх министерстви, нумай райисполкомсем колхозсене тата МТС-сене ĕçе тĕплĕ пĕлмесĕр ертсе пыраççĕ, колхозсенче ĕç дисциплинине çирĕплетес, колхозсенчи ертсе пыракан кадрсене воспитани парас тата вĕрентсе ÿстерес енĕпе куллен тăрăшса ĕçлемеççĕ, малта пыракан колхозсен опытне тата агротехникăн прогрессивлă меслечĕсене пропагандăласа, культурăсене тăваткал тĕрĕн лартса ÿстермелли, тĕштырăсене хĕреслĕ майпа тата анçăр ретлĕ акмалли, пахча çимĕçсен калчисене торфпа çĕрĕк тăпри чÿлмекĕсенче лартмалли меслетсене ялхуçалăхĕнче пурнăçа кĕртсе пырас тĕлĕшпе организаторла ĕçе куллен-кун туса пымаççĕ. Республикăра сад ĕрчетес, хăмла тăвас, пахча çимĕç лартса ÿстерес ĕçсене анлă сарас, тахçантанпах акса-лартса тăракан техникăлла культурăсене — кантăр, йĕтĕн тата махорка нумайрах акса-лартса ÿстерес тĕлĕшпе кирлĕ пек ĕçлемеççĕ, хальхи вăхăтра çак культурăсене акса тăвакан çĕр лаптăкĕ пĕчĕк, вĕсем те нумай колхозсен уй-хирĕсенче, çак культурăсен тухăçлăхĕ пĕчĕк пулать.

Республикăри нумай районсенче çурхине хатĕрленес ĕçе çителĕксĕр организациленĕ, çапах та Министрĕсен Совечĕ, Ялхуçалăх министерстви тата райисполкомсем ку ĕçри пысăк çитменлĕхсене пĕтерме тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ. Чылай культурăсен вăрлăхĕсене хатĕрлесе хумалли плана республикăра халиччен те тултарман. Тĕштырăсемпе пăрçа йышши культурăсен вăрлăхне хатĕрлесе хурасси Советски, Сĕмĕрле, Сĕнтĕрвăрри тата Шăрачкав районĕсенчи колхозсенче, вăрлăхлăх çĕрулми хатĕрлесе хурасси — Чкаловски, Елчĕк, Первомайски, Шăмăршă тата Вăрнар районĕсенчи колхозсенче уйрăмах начар пулса пырать.

Республикăри машина-трактор станцийĕсенчи пуян техникăпа çителĕксĕр усă кураççĕ, организацилĕ ĕçри йĕркесĕрлĕхсем пирки тракторсем ĕçлемесĕр тăнисем нумай пулаççĕ, трактористсенчен нумайăшĕ сменăри нормăна пурнăçламаççĕ, машина-трактор станцийĕсенчен нумайăшĕ ĕçсене вăхăтра тата лайăх тăвас енĕпе колхозсемпе тунă договорсенче хăйсем çине илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртмеççĕ. Кăçал уйрăмах Красноармейски, Калинино, Сĕнтĕр машина-трактор станцийĕсем çителĕксĕр ĕçленĕ.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ, Ялхуçалăх министерстви тата райисполкомсем специалистсене суйласа илсе МТС-семпе колхозсене ярас ĕçе вăраххăн туса пыраççĕ, МТС-сене инженерсемпе техниксем ярса тĕреклетес ыйтăва ытла та ерипен татса параççĕ, ялхуçалăх специалисчĕсем, инженерсемпе техниксем валли культурăпа йăла условийĕсене туса памаççĕ, пурăнмалли çурт тупса пама кирлĕ пек тăрăшмаççĕ. МТС директорĕсен нумайăшĕ колхозсене янă ялхуçалăх специалисчĕсен ĕçĕсене кирлĕ пек ертсе пымаççĕ, МТС-сем валли механизаторсен кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлес енĕпе начар ĕçлеççĕ. Республикăри нумай МТС-сенче, уйрăмах Буславкка, Муркаш, Калинино, Сĕмĕрле Первомайски МТС-ĕсенче тракторсене, ытти ялхуçалăх машинисемпе хатĕрсене юсас ĕçе çителĕксĕр организациленĕ.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ общественнăйлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата тухăçлăхне ÿстерес ĕçе начар ертсе пырать тесе РСФСР Министрĕсен Совечĕ тĕрĕс палăртрĕ. Юлашки виçĕ çул хушшинче республикăра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли план пурнăçа кĕрсе пымасть. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пурнăçлас ĕç уйрăмах Вăрнар, Сĕнтĕрвăрри, Буславкка, Улатăр районĕсенче япăх тăрать. Ама выльăхсен йышне пысăклатас ĕç çителĕксĕр пулса пырать, колхозсенчи мăйракаллă шултра выльăхсен йышĕнче ĕнесем пĕтĕмпе те 30 процент çеç, Шăмăршă, Первомайски, Елчĕк районĕсенче — 23 процентран пуçласа 27 процент таран кăна. 1952 çулта план тăрăх кашни ĕнерен, вăтам шутпа, 1.100 литр сĕт суса илмелле пулнă, анчах 739 литр çеç суса илнĕ. Чылай районсенче кăçал та ĕнесен сĕт тухăçлăхне ÿстерме тивĕçлĕ мерăсем йышăнман. Республикăра улăх-çарансене тата кĕтÿ кĕтмелли вырăнсене лайăхлатас, выльăх апачлĕх культурăсен, акса ÿстерекен курăксен тухăçлăхне ÿстерес тата выльăх апачĕ хатĕрлессине механизацилес тĕлĕшпе ĕçсем япăх пулса пыраççĕ. Республикăри нумай колхозсенче общественнăйлла выльăх-чĕрлĕх валли витесем çителĕклĕ туман, выльăхсене шăварас тата пăхас ĕçе япăх йĕркеленĕ, выльăхсене лайăх хĕл каçарма кирлĕ ĕçсене тумаççĕ.

Республикăра колхозниксене выльăхсем туянма тата выльăх апачĕ хатĕрлеме пулăшас тĕлĕшпе кирлĕ пек тăрăшни çук-ха, колхозниксен килĕсен 50 процентĕнче ĕне çук.

СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ промышленность куллен кирлĕ таварсем туса кăларассине хăвăрт вăйлатасси çинчен, ĕççыннисен йăлапа культура ыйтăвĕсене тивĕçтерессине лайăхлатасси çинчен йышăннă постановленисенчен Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ тата унăн председателĕ Афанасьев юлташ тивĕçлĕ вывод туманнине РСФСР Министрĕсен Совечĕ тĕрĕс кăтартса панă. Республикăра вырăнти промышленноçпа кооперации промышленноçне аталантарма чĕртаварăн пуян ресурсĕсемпе питех те начар усă кураççĕ. Вырăнти органсене пăхăнса тăракан промышленноçра техника сахал. Вăл хăшпĕр япаласене çеç туса кăларать, ассортимент анлă мар, туса кăларнă япалисем чылай чухне начар пулаççĕ, халăхăн ыйтăвĕсене тивĕçтерекен мастерскойсем республикăра ытла та сахал, хальхи мастерскойсем те япăх ĕçлеççĕ. Вырăнти тата топливо промышленноçĕ министерствипе Чăвашпромсовет хăйсене пăхăнса тăракан предприятисен ĕçĕсене лайăхлатма çителĕклĕ тăрăшмаççĕ. Нумай магазинсемпе лавккасенче чылай чухне куллен кирлĕ таварсем пулмаççĕ, çав вăхăтрах ыйтман таварсем базăсенче нумай выртаççĕ. Чăвашпотребсоюз районти потребсоюзсемпе ялпосен ĕçĕсене япăх ертсе пырать, суту-илÿ организацийĕсене халăх ыйтакан таварсем вăхăтра парса тăма тăрăшмасть.

Республикăри вăрман промышленноçĕ питех те çителĕксĕр ĕçлет. Унта техникăпа начар усă кураççĕ. Рабочисем валли пурнăçпа йăла условийĕсене туса паман пирки, ĕçлекенсем алăран улшăнса тăраççĕ. Министрсен Совечĕ, «Чувашлес» трестĕ тата райисполкомсем вăрман промышленность предприятийĕсен ĕçĕсене лайăхлатма тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Коммунальнăй хуçалăх министерстви капитальнăй строительствăна ертсе пырас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Çавна пула пурăнмалли çуртсем, коммунальнăй предприятисем лартма тата благоустройство валли уйăрса пыракан укçа-тенкĕн чылай пайĕпе усă курмасăр юлаççĕ. Пурăнмалли çуртсемпе коммунальнăй предприятисем лартма илнĕ укçа-тенкĕпе кăçал та начар усă кураççĕ, декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне бюджетран паракан укçа-тенкĕн 79,9 процентне çеç усă курнă.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ, Коммунальнăй хуçалăх министерстви, ĕççынни депутачĕсен хула тата район Советĕсен исполкомĕсен нумайăшĕ хуласемпе район центрĕсене лайăхлатса илемлетес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ, вĕсенче санитари йĕркине мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслесе тăмаççĕ. Вырăнти Советсен пурăнмалли çурчĕсене нумайăшне тирпейлĕ тытса усрамаççĕ, вăхăтра юсамаççĕ тата начар юсаççĕ. Пурăнмалли çуртсем тата культурăпа йăла учрежденийĕсем тăвассине тата вĕсене ĕçе ярасси мĕнле пулса пынине япăх тĕрĕслесе тăраççĕ.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ, ĕççынни депутачĕсен район тата хула Советĕсен исполкомĕсем, предприятисенчи, учрежденисенчи, пурăнмалли çуртсенчи санитари йĕркине лайăхлатассишĕн, халăха культурăллă пурăнма хăнăхтарассишĕн тимлĕн кĕрешмеççĕ. Нумай предприятисенче, нумай столовăйсенче, чăйнăйсенче тата магазинсенче санитари тĕлĕшĕнчен кирлĕ йĕркене ĕçе кĕртсе пымаççĕ. Нумай больницăсенче [illegible] тата ытти сĕтел-пукансемпе хатĕрсем пулма тивĕçлĕ инвентарь çук, çав вăхăтрах вĕсене туянма уйăрса панă укçа-тенкĕ çултан-çул усă курмасăр юлать. Чăваш АССР Финанс министерстви, хула тата район Советĕсен исполкомĕсем чиртен сыватакан учрежденисене валли бюджетран памалли укçана вăхăтра парса тăмаççĕ.

РСФСР Министрĕсен Совечĕ трахомăпа чирлессине пĕтересси çинчен йышăннă постановленине Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ пурнăçа кĕртеймен. Трахомăран сыватас ĕç енĕпе уйрăмах Комсомольски, Елчĕк, Канаш, Чкаловски, Первомайски районĕсенче япăх ĕçлеççĕ.

Халăхăн культура шайне ÿстерес ĕçе Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ питех те начар ертсе пырать тесе РСФСР Министрĕсен Совечĕ тĕрĕс палăртнă. Пур ачасене те обязательнăй йĕркепе çичĕ çул вĕрентмелли закон республикăра пурнăçа кĕрсе пыраймасть, кашни çулах чылай ачасем шкул тулашĕнче юлаççĕ. Кăçалхи декабрĕн 5-мĕшĕ тĕлне шкула кайма çул çитнисенчен 345 ачана шкулта обязательнăй йĕркепе вĕренме хутшăнтарман. Шкулсенче вĕренÿре ĕлкĕрсе пыракансем 1951—1952 вĕренÿ çулĕнче 87,4 процент пулнă пулсан, 1952—1953 вĕренÿ çулĕнче ачасен 84,2 проценчĕ çеç вĕренÿре ĕлкĕрсе пынă, çапла вара вĕренÿре ĕлкĕрсе пыракансен проценчĕ чакнă. Хута сахал пĕлекенсене тата хут пĕлменнисене вĕрентес енĕпе питех те çителĕксĕр ĕçлеççĕ, план тăрăх 1953 çулта вĕрентме палăртнă хут пĕлмен çынсенчен 22,3 процентне çеç вĕренме илĕртнĕ.

Республикăри ялсенчи библиотекăсене валли çĕнĕ литература, уйрăмах чăвашла кĕнекесем сахал туянаççĕ.

Радиофикаци ĕçне анлă сармалли майсемпе питех те сахал усă кураççĕ. Республикăри ялсенче мĕнпур килсен 20 процентне çеç радио кĕртнĕ. Ялсенчи 49 клубра тата 53 вулав çуртĕнче халĕ те радио çук.

Кинотеатрсем ытла та начар ĕçлеççĕ. Кинокартинăсем кăтартмалли план пурнăçланса пымасть. Чăвашла куçарнă кинокартинăсене республикăра сахал кăтартаççĕ.

РСФСР Министрĕсен Совечĕ кăтартса панă тăрăх, ялхуçалăхĕнчи, промышленноçри, халăхăн культурăпа йăла шайне ÿстерес ĕçри пысăк çитменлĕхсен сăлтавĕсем çаксем пулаççĕ: Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ тата унăн председателĕ Афанасьев юлташ хăйсен ĕçĕсене критиклесе хакламаççĕ, республикăра ĕçсем мĕнле тăнине тĕрĕс мар хаклаççĕ тата хуçалăхпа культура строительствине аталантарас ĕçри [illegible] ытлашши пысăк хурса шутлаççĕ, [illegible] СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ ялхуçалăхне малалла аталантармалли, куллен кирлĕ таварсем туса кăларассине [illegible] çинчен йышăннă постановленисене пурнăçлама ĕççыннисен массине [illegible] организацилесе пымасть. — РСФСР Министрĕсен Совечĕ çакна пĕтĕмпех кăтартса панине Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ тĕрĕс тесе шутлать.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ çапла йышăнать:

1. Чăваш АССР Министрĕсен Совечне республикăри хуçалăхпа культура строительствине ертсе пырас ĕçри пысăк çитменлĕхсене, РСФСР Министрĕсен Совечĕ «Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн ĕçĕсем çинчен» йышăннă постановленире кăтартса панине, пĕтерме мерăсем йышăнма. Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ кăтартса панă задачăсене пурнăçласа, халăх хуçалăхне хăвăрт аталантарма республикăн мĕнпур майĕсемпе туллин усă курма, вăл ĕçе Вырăнти Советсене тата ĕççыннисене анлă хутшăнтармалла.

2. Чăваш АССР Министрĕсен Советне, Ялхуçалăх министерствине, райисполкомсене, КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн решенийĕсем тăрăх, [illegible]

а) общественнăйлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес [illegible] 1954—1955 çулсенче [illegible]; 1954 çулта колхозсенче 200 фермăна шыв парас ĕçе механизацилемелле, 100 фермăра выльăхсене [illegible] автопоилкăсем лартмалла, 50 фермăна [illegible] электричествăпа [illegible], 100 фермăра шалти транспорта организацилесе, 600 ферма [illegible];

б) çĕрулмипе пахча çимĕç [illegible]; 1954 çулта колхозсенче çĕрулми 35 пин гектар çĕр [illegible], пахча çимĕçсем 4 пин гектар çине [illegible], 31 пин рама [illegible] 15 пин рама [illegible]; 1954 çулта республикăри колхозсенче [illegible] 150 центнер [illegible];

в) [illegible]

МТС-сене [illegible]

(Малалли 2-мĕш страницăра).

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ йышăннă постановлени

РСФСР Министрĕсен Совечĕ „Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн ĕçĕсем пирки“ йышăннă постановлени çинчен

(Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра).

Хальхи вăхăтра пур машинăсемпе тата тракторсемпе усă курас ĕçе лайăхлатмалла, апрелĕн 10-мĕшĕ тĕлне тракторсене, июнĕн 10-мĕшĕ тĕлне комбайнсене юсаса пĕтермелле; пур трактористсемпе комбайнерсем те сменăри нормăсене тултарассине, тракторсене тирпейлĕ пăхса усрассине организацилемелле, тракторсем ĕçлемелли вăхăтра ахаль тăни пулмалла мар; ялхуçалăх ĕçĕсен пахалăхне тата МТС-семпе колхозсем хушшинче туна договорсенче палăртнă обязательствăсене мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине хытă тĕрĕслесе тăмалли йĕрке тăвас пулать.

1954 çулта МТС-сенче халăх хуçалăх планĕнче палăртса хунă çуртсене — машинăсем юсамалли типовăй 9 мастерской, 38 гараж, 4 лупас тата ытти çуртсем, çавăн пекех тата МТС-сенчи специалистсемпе рабочисем валли 2,66 пин тăваткал метр чухлĕ пурăнмалли çуртсем лартмалла. МТС-сенчи строительствăна пурнăçлама республика территорийĕнчи промышленноçпа строительство организацийĕсене хутшăнтармалла.

1954—1956 çулсенче машина-трактор станцийĕсенчи рабочисем, инженерсем, техниксем, служащисем хăйсем валли çуртсем лартассине анлăн сармалла, вĕсене çуртсем лартма кирлĕ строительство материалĕсем туянма тата турттарса пыма пулăшмалла.

1954 çулта Канашри моторсем юсакан завода пысăклатмалла тата çĕнетмелле, унăн хăватне çултанлăкра тĕпрен 600 автомашина, 600 мотор юсама тата 600 тонна металл шăратма кирлĕ чухлĕ ӳстермелле;

г) 1954—1955 çулсенче республикăри пур колхозсенче те курăксем акмалли тĕрĕс пусă çаврăнăшĕсем туса çитермелле, кашни колхозăн нумай çул тата пĕр çул ӳсекен курăксен вăрлăхĕсем хăйне кирлĕ чухлĕ пулмалла тăвас пулать.

Колхозсен ĕçĕнче малта пыракан опыта тата агротехникăн çĕнĕ меслечĕсене — çĕрулмине тăваткал тĕмĕн лартмалли тата ытти пропашной культурăсене çавăн пек лартмалли тата акмалли, тĕштырăсене хĕреслĕ майпа тата ансăр ретлĕ акмалли, каçчана торфпа çĕрĕк тăпри чӳлмекĕсене лартмалли, органикăлла удобренисемпе минераллă удобренисене хутăштарса уй-хире тăкмалли меслетсене анлăн пурнăçа кĕртсе пымалла.

Тислĕк, торф тата вырăнти ытти удобренисене нумай пухмалла та уй-хире кăлармалла, çавăн пекех тата минераллă удобренисемпе хальччен хинчен ытларах усă курмалла; йӳçĕк тăпрасене известь сапса лайăхлатма известь çунтарас ĕçе организацилемелле, сухаласенне тарăнлатас ĕçе чылай лайăхлатмалла.

1954 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне мĕнпур тырăсен тата ытти культурăсен вăрлăхĕсене çителĕклĕ хатĕрлесе хумалла, вĕсене акма юрăхлă туса çитермелле, пур колхозсенче те сортлă вăрлăхсем çителĕклĕ пулччăр;

д) республикăри колхозсенче нумай отраслĕ тата пысăк тупăшлă хуçалăха аталантарас шутпа кантăр, йĕтĕн, хăмла, махорка, вăрлăхлăх пахча çимĕç акса-лартса тăвассине чылай сармалла, çавăн пекех сад ĕрчетес ĕçе пур майсемпе те сарса пымалла: 1954 çулта 450 гектар çинче сад тума, 140 гектар çинче çырла пахчи тума йывăçсем лартмалла.

Кӳлĕсемпе пĕвесем пур колхозсенче хур-кăвакал шутне, çĕçен-хирĕ районсенче кăркăсен шутне чылай ӳстермелле. Кӳлĕсемпе пĕвесенче пулă ĕрчетес ĕçе тата хурт-хăмăр усрас ĕçе пур майсемпе те вăйлатса пымалла.

3. Чăваш АССР Министрĕсен Советне, Ялхуçалăх министерствине, райисполкомсене тата колхозсен руководителĕсене çапла тума хушас: колхозниксене выльăхсем туянма тата хăйсен килĕсенчи выльăхсем валли апат хатĕрлеме пулăшмалла, вĕсен выльăхĕсем валли ĕçкунĕсем тăрăх выльăх апачĕ валеçмелле тата кĕтӳ кĕтмелли вырăнсем уйăрса памалла.

4. Чăваш АССР Министрĕсен Советне, Вырăнти тата топливо промышленноçĕн министерствине, Строительство материалĕсем тăвакан промышленность управленине, Сул-йĕрпе транспорт хуçалăхĕн управленине, Чăвашпромсовета, хула тата район Совечĕсен исполкомĕсене çапла тума хушас:

а) вырăнти органсене пăхăнса тăракан промышленноçа ертсе пырасине лайăхлатмалла, кашни предприяти хăйĕн планне ассортиментра палăртнă йăласене пурне те туса кăларнине пурнăçламалла тума предприятисен руководителĕсенчен çирĕппĕх ыйтмалла.

1954 çулта промысла артелĕсене тата вырăнти органсене пăхăнса тăракан предприятисене пĕрлештерсе пысăклатмалла, вĕсене кашни уйрăм япаласем туса кăларакан — сĕтел-пукан, урапа-çуна тăвакан, йывăç япаласем тăвакан тата кĕпе-тумтир çĕлекен артельсемпе предприятисем тумалла.

Вырăнти промышленноçпа кооперации промышленноçне аталантарма, уйрăмах кирпĕч, черепица, известь тума, чул хатĕрлеме вырăнти чĕртаварпа анлăн усă курмалла.

1954 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне Сĕмĕрле хулинче сĕтел-пукан цехне туса пĕтермелле.

1954 çулта çăмата йăвалмалли фабрика лартмалла, вăл çулталăкра 60 пин мăшăр çăмата йăваласа кăлармаллăх пулмалла; çулталăкра 1,8 миллион кирпĕч туса кăларма пултаракан икĕ кирпĕч завочĕ тата 2,5 миллион штук кирпĕч туса кăларма пултаракан пĕр кирпĕч завочĕ лартмалла; «Металлист» артелĕн чугун шăратакан цехне пысăклатмалла; 1954 çулта Улатăрти тата Канашри кирпĕч завочĕсене, Буславккари чул кăлармалли карьера урăхлатса çĕнетме тытăнмалла.

1954 çулта Чăвашпромсоветăн сĕтел-пукан тăвакан пĕр артелĕ çумĕнче сĕтел-пукан юсакан механически мастерской организацилемелле, артельсенче сĕтел-пукана пульверизаци меслечĕпе илемлетме тытăнмалла;

б) Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн вырăнти органсене пăхăнса тăракан промышленность туса кăларакан япаласен пахалăхне тĕрĕслекен комиссийĕ панă сĕнӳсене 1954 çулхи январĕн 15-мĕшĕччен пурнăçа кĕртмелле, малашне туса кăларакан япаласен пахалăхне хытă тĕрĕслесе тăмалли йĕрке тумалла;

в) халăх валли ĕçлекен мастерскойсен шутне нумайлатмалла тата вĕсен ĕçне лайăхлатмалла, мастерскойсем вырсарникунсенче ĕçлессине организацилемелле, çав мастерскойсене предприятисемпе организацисем заказсем парса тултарни пулмалла мар;

г) республикăри вăрман промышленноçĕн предприятийĕсен ĕçĕсене татăклăнах лайăхлатмалла, кашни предприяти сезонри тата çулталăкри плана тултармалла; рабочисемпе специалистсем валли культурăпа йăла тĕлĕшĕнчен лайăх условисем туса памалла; сезонта ĕçлекен рабочисене пухмалли плана тултармалла, рабочисем пĕрмаях улшăнса тăнине пĕтермелле, кашни район йывăç турттармалли тата йывăça вăрмантан турттарса тухмалли плана правительство кăтартса панă срокра пурнăçламалла;

д) сул-йĕр тумалли материалсем хатĕрлемелли, çулсемпе кĕперсем тумалли тата юсамалли плана пурнăçа кĕртмелле, çавăн пекех тата çул-йĕрсемпе кĕперсене пĕрмаях тирпейлĕ тытса усрас ĕçе татăклăнах лайăхлатмалла, çул-йĕр ĕçĕсене ытларах механизацилемелле.

5. Чăваш АССР Министрĕсен Советне, Суту-илӳ министерствине, Чăвашпотребсоюз правленине, ĕçсынни депутачĕсен хула тата район Совечĕсен исполкомĕсене çапла тума хушас: суту-илӳ ĕçне ертсе пырассине лайăхлатмалла, столовăйсемпе чайнăйсен тата суту-илӳ организацийĕсен ĕçĕнче кирлĕ пек йĕркеллĕх тумалла, суту-илӳ тăвакан кашни предприятин тавар çаврăнăш планне пурнăçламалла, хуласенче тата ялсенче магазинсемпе лавккасен шутне нумайлатмалла, растратăсене тата çаратнисене хирĕç кĕрешессине вăйлатмалла, вырăнти промышленноçпа кооперации промышленноçĕн суту-илӳ организацийĕсене халăха сутма таварсем тăратмалли плансене пĕтĕмпех пурнăçламалла.

Япаласен магазинĕсемпе лавккисенче халăха кирлĕ таварсем яланах пулмалла, колхозсем пасарсенче тата комисси йĕркипе потребительсен кооперацийĕ урлă ялхуçалăх продукчĕсем сутассине анлă сармалла.

6. Чăваш АССР Министрĕсен Советне, Коммунальнăй хуçалăх министерствине, хула тата район Совечĕсен исполкомĕсене çапла тума хушас:

а) коммунальнăй строительствăна ертсе пырас ĕçе вăйлатмалла, бюджетран уйăрса паха палăртнă укçапа пĕтĕмпех усă курассине пурнăçа кĕртмелле; 1954—1955 çулсенче Шупашкар хулинчи электричество линийĕсене çĕнетес, водопровода вăрăмлатас тата Улатăр хулинче электростанци тăвас ĕçе пĕтĕмпех туса пĕтермелле;

б) хуласенчи, рабочи поселоксенчи тата район центрĕсенчи халăх валли шыв парса тăрассине лайăхлатма çĕнĕ çăлсем чавмалла, кивĕ çăлсемпе çăлкуçĕсене тата шыв илмелли ытти вырăнсене юсаттармалла;

в) хуласене, рабочи поселоксене, район центрĕсене лайăхлатса илемлетес, санитари тĕлĕшĕнчен таса тытса усрас, сул-йĕр хуçалăхне лайăхлатас, кĕперсем, тротуарсем, пусмасем тутарас тата канавсене юсаттарас, урамсене йывăç лартас, скверсемпе парксене пысăклатас ĕçе вăйлатмалла, çак ĕçсене тума общественноçа, промышленность предприятийĕсене тата учрежденисене хутшăнтармалла. Республикăри пур хуласемпе ялсенче те тасалăхпа йĕркелĕх тума тăрăшмалла;

г) вырăнти Советсем лартакан пурăнмалли çуртсене вăхăтра туса пĕтермелле, çуртсем лартмалли плансене пурнăçа кĕртмелле.

Союзлă органсене тата республика (РСФСР) органĕсене пăхăнса тăракан предприятисем пурăнмалли çуртсем тата коммунальнăй çуртсем лартас ĕçе мĕнле туса пынине хытă тĕрĕслесе тăмалла. Хуласемпе район центрĕсенче çуртсем лартас ĕçре йĕркелĕх тумалла, Совет исполкомĕ ирĕк памасăр çуртсем лартма чармалла;

д) республикăра хуçалăхпа культура строительствине малалла аталантарса пыни кирлĕ, çавна май Чăваш АССР Министрĕсен Советне «Сельстрой» тресчĕ организацилесе пирки РСФСР Министрĕсен Совечĕ умне ыйту лартма, çав треста 1954 çулта организацилеме тăрăшма хушас.

7. Чăваш АССР Министрĕсен Советне, Сывлăх министерствине, хула тата район Совечĕсен исполкомĕсене сывлăха сыхлас ĕçе ертсе пырассине тĕпренех лайăхлатма, медицина учрежденийĕсенче тата трахома чирĕнчен сыватакан пунктсенче йĕркелĕх тума витĕмлĕ мерăсем йышăнма, вĕсене хĕллехи вăхăтра хутма топливо çителĕклĕ пама, рабочисен общежитийĕсенче санитари тĕлĕшĕнчен йĕркелĕхе лайăхлатма, халăх хушшинче санитари енĕпе тăтăшах вĕрентес ĕçе анлă сарма хушас. Медицина работникĕсемпе общественноçа вар-хырăм чирĕсене тата трахома чирне пĕтерме мобилизацилемелле, 1954 çулта республика больницин терапевтически корпусне, 1955 çулта — хирурги корпусне туса пĕтермелле. 1954 çулта Шупашкар хулинче ача çуратмалли çурт лартма тытăнмалла.

Чăваш АССР Министрĕсен Советне, Главнăй аптекоуправленин Чăваш республикинчи уйрăмне сыватакан тата профилактика учрежденийĕсем валли эмелсем çителĕклĕ кӳрсе килме хушас.

8. Чăваш АССР Министрĕсен Советне, Сутĕç министерствине, хула тата район Совечĕсен исполкомĕсене çапла тума хушас:

а) шкулсенче вĕрентӳпе воспитани ĕçне тата ачасем вĕренӳре ĕлкĕрсе пырассине лайăхлатма, шкулсене ертсе пыракансен тата учительсен квалификацийĕ кадрĕсемпе тĕреклетме мерăсем йышăнмалла; шкулсенчи вĕрентӳ ĕçĕшĕн хытăрах ыйтмалла тăвас пулать; шкула çӳреме çул çитнĕ ачасене пурне те вĕренме явăçтармалла, вĕренӳ çулĕн тăршшĕнче вĕренме пăрахни пулмалла мар; шкулсен планпа усма палăртнă интернатсене 1954 çулхи январĕн 1-мĕшĕччен усмалла, вĕсем валли сĕтел-пукан тата вутă çителĕклĕ хатĕрлесе памалла;

б) 1953—1954 вĕренӳ çулĕнче республикăри хутла сахал пĕлекен тата хут пĕлмен çынсене пурне те вĕренме явăçтармалла, çак ĕçе халăх хуçалăх планĕнче палăртнă пек тумалла, хутла сахал пĕлнине тата хут пĕлменнине пĕтерес тĕлĕшпе шкулсем мĕнле ĕçленине хытă тĕрĕслесе тăмалла; план тăрăх çамрăк рабочисемпе ялти çамрăксен шкулĕсенче вĕренме мĕçе çын пама палăртнă, çавăн чухлĕ илмелле, çак шкулсен ĕçне лайăхлатмалла;

в) 1954 çулта Букеçри, Тĕрлемесри тата Ырашпулăхри шкулсене туса пĕтермелле, план тăрăх 1954 çулта лартмалли ытти шкулсем енĕпе те строительство ĕçĕсене пĕтĕмпех туса çитермелле, учительсем валли çуртсем лартмалли заданисене пурнăça кĕртмелле.

г) Чăваш АССР Министрĕсен Советне педагогика тата ялхуçалăх институчĕсен çуртĕсене тăвас ĕçе хуллен тĕрĕслесе тăма тата çак çуртсене тăвассине хăвăртлатма хушас.

9. Чăваш АССР Министрĕсен Советне, Социальнăй обеспечени министерствине, хула тата район Совечĕсен исполкомĕсене вăрçăра вилнĕ воинсен çемйисемшĕн, тăлăх ачасемшĕн, вăрçă тата ĕç инвалидĕсемшĕн ытларах тăрăшма, вĕсен пурнăçне, культурăпа йăла условийĕсене лайăхлатса пыма хушас.

10. Чăваш АССР Министрĕсен Советне, Финанс министерствине хула тата район Совечĕсен исполкомĕсене бюджета пурнăçлама, сывлăха сыхлас ĕç, халăха вĕрентес ĕç, культура учрежденийĕсем валли, çавăн пекех тата республикăн халăх хуçалăхне малалла аталантарма тата социально-культурăллă ĕçсене пурнăçлама укça-тенкĕ вăхăтра тата йĕркеллĕ парса тăма хушас.

11. Чăваш АССР Министрĕсен Советне, Культура министерствине, хула тата район Совечĕсен исполкомĕсене çапла тума хушас:

а) культурăпа çутĕç учрежденийĕсен укçа-тенкĕпе пурлăх никĕсне тĕреклетме тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла, вулав çурчĕсемпе клубсене ялти чăн-чăн культура вучахĕсем туса хумалла;

б) лекцисем ирттерес ĕçе ертсе пырассине вăйлатмалла; лекцисем, уйрăмах чăвашла лекцисем, нумайрах ирттермелле, лекцисен идейăпа теори тĕлĕшĕнчи шайне ӳстермелле.

Кĕнекесене вулакансем патне çитерес тата хаçат-журнал сарас ĕçе вăйлатмалла; библиотекăсенче республикăри тĕп халăх чĕлхипе кăларнă кĕнекесен шутне нумайлатмалла;

в) халăха кино кăтартас ĕçе лайăхлатмалла, кашни хулапа ялта кинокартинăсем час-часах кăтартмалла. 1954 çулта Улатăр хулинче кинотеатр, Муркашра Культура çуртĕ туса пĕтермелле. 1954 çулта кино аппарачĕсем юсакан 6 пункт усмалла.

Чăвашла куçарнă кинокартинăсем нумайрах кăлармалла;

г) театрсемпе филармоние ертсе пырас ĕçе лайăхлатмалла; театрсенче çĕнĕ постановкăсем пулмалли плана пурнăçламалла, театрсемпе филармонин производствăпа финанс планне тултармалла; чăваш театрĕсене валли кучуклехи пурнăça кăтартакан, идея тĕлĕшĕнчен тата илемлĕх енĕпе паха пьесăсем пама тăрăшмалла.

Чăваш АССР Министрĕсен Советне республикăри театрсем валли нациялле кадрсем хатĕрлес ыйтăва пăхса тухса татса пама хушас.

12. Чăваш АССР Министрĕсен Советне çапла тума хушас:

а) министерствăсене, управленисене, хула тата район Совечĕсен исполкомĕсене ертсе пырас ĕçе лайăхлатмалла, вĕсенчен халăх хуçалăх планĕсене анăçлă пурнăçламалла тăвас енĕпе хытăрах ыйтмалла, мĕнле ĕçленине тăтăшах тĕрĕслемелле тата отчетсем илмелле. Министрсен Совечĕн, хула Совечĕсен исполкомĕсемпе райисполкомсен ыйтусене коллегилле майпа татса парас йĕркене пурнăçласа пымалла;

б) предприятисенче, колхозсенче, МТС-сенче, социально-кульурăллă учрежденисенче ĕçсем мĕнле пулса пынине тĕплĕн пĕлсе тăмалла, партипе правительство постановленийĕсем тата хăйсем йышăнакан постановленисем мĕнле пурнăçа кĕнине яланах тĕрĕслесе тăмалла;

в) райисполкомсен ĕçĕсене урăхлатса çĕнетмелле, райисполкомсем колхозсен тата уйрăмах МТС-сен ĕçĕсене куллен тата оперативлă ертсе пымалла;

г) çакăн пек йĕрке тумалла: ĕçсыннисем Чăваш АССР Министрĕсен Советне, министерствăсене, управленисене, район тата хула Совечĕсен исполкомĕсене паракан жалобăсемпе заявленисене Министрсен Совечĕн председателĕ тата унăн заместителĕсем, министрсемпе вĕсен заместителĕсем, управленисен начальникĕсемпе вĕсен заместителĕсем, хула тата район Совечĕсен исполкомĕсен председателĕсемпе вĕсен заместителĕсем хăйсем пăхса тухмалла; республикăн Министрсен Советĕнче, министерствăсенче, управленисенче, Советсен исполкомĕсенче ĕçсыннисене йышăнас ĕçе лайăх йĕркелемелле;

д) вырăнти Советсен ĕçне ĕçсыннисене анлăн хутшăнтарма кирлĕ ĕçсене тумалла, Советсен яланхи комиссийĕсен ĕçĕсене лайăхлатмалла.

• • •

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ республикăри ĕçсыннисене партин XIX-мĕш съездĕн тата КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн постановленийĕсене пурнăçлама мĕнпур вăйсене мобилизацилеме, творчествăллă пуçарулăха анлăн сарма чĕнет.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.
Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ Д. МИТЬКОВ.
Шупашкар хули, 1953 çулхи декабрĕн 12-мĕшĕ.

Шупашкар хулинчи ВЛКСМ организацийĕн конференцийĕ

Шупашкар хулинчи ВЛКСМ организацийĕн XIII-мĕш конференцийĕ пулса иртрĕ. Конференци хула комитечĕн секретарĕ Алфер юлташ тунă отчетлă доклада итлесе сӳтсе явтĕ.

Делегатсем хулари ВЛКСМ организацийĕ комсомолецсемпе çамрăксене коммунизмла воспитани парас тĕлĕшпе хăшпĕр ӳсĕмсем тунине палăртрĕç. Нумай предприятисенчи комсомолецсем ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн, продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн кĕрешес ĕçре çамрăксене хавхалантарса пыраççĕ.

Электроаппаратура заводĕнчи комсомолецсем пурте ĕç нормине тултараççĕ. Нумай комсомолецсем тата çамрăксенчен тăракан уйрăм бригадăсем темиçе çулхи заданне пурнăçланă. Вахтерова Иванов токарьсем халĕ 1958—1959 çулсемшĕн ĕçлеççĕ. Çамрăксен 189 бригади лайăх продукци туса кăларакан бригада ятне илессишĕн кĕрешет.

Чăлха фабрикинчи, лента тĕртекен фабрикăри, пир-авăр комбинатĕнчи, «Победа» промартельти тата ытти чылай предприятисенчи комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем те лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ.

Хулари ВЛКСМ организацийĕнче комсомолецсемпе çамрăксене политикăлла пĕлӳ парас ĕç те чылай лайăхланнă. Политшкулсемпе кружоксенче 1.740 çын вĕренет, 1.172 комсомолеца парти вĕренĕвне хутшăнтарнă. Кунсăр пуçне çĕршер çын çамрăк рабочисен каçхи шкулĕсенче, вăтам тата аслă шкулсенче заочнăй майпа вĕренсе хăйсен пĕлĕвне ӳстереççĕ.

Кунпа пĕрлех конференци ВЛКСМ хула комитечĕн ĕçĕнчи пысăк ситменлĕхсене палăртрĕ. ВЛКСМ хула комитечĕ комсомолăн Центральнăй Комитечĕн XII-мĕш пленумĕ йышăннă решенисене пурнăçа кĕртме кирлĕ мерăсем йышăнман. Комсомол комитечĕсем çамрăк рабочисем мĕнле обязательствăсем илнине сахал интересленеççĕ, ăмăрту итогĕсене кăтартса пымаççĕ. Зарубин, Дорохов тата Иванов юлташсем 11-мĕш номерлĕ «Легпромстрой» трестĕнчи комсомол организацийĕ производство ыйтăвĕсемпе сахал интересленни çинчен каларĕç. Кунти нумай комсомолецсем производство заданине тултараймаççĕ. Çамрăк рабочисене политикăлла воспитани парас ĕç çителĕксĕр пулса пырать. ВЛКСМ комитечĕн ĕçĕнче пысăк ситменлĕхсем пур пулни те хула комитечĕ кунти комсомол организацине тивĕçлĕ пулăшу паманнипе.

Суту-илӳçĕ обществăлла апатланӳ предприятийĕсенчи çамрăк рабочисен социализмла ăмăртăвне йĕркелес ĕçре пысăк ситменлĕхсем пур. Суту-илӳ предприятийĕсемпе столовăйсенчи комсомол организацийĕсем СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ «Совет суту-илĕвне малалла аталантарса пымалли мерăсем çинчен» йышăннă постановлени пурнăçа кĕртессишĕн кирлĕ пек кĕрешмеççĕ.

Хулари чылай комсомол организацийĕсем КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ кăларса тăратнă задачăсене пурнăçлас ĕçре те хăйсен пуçарулăхне кирлĕ чухлĕ палăртаймаççĕ.

Меркулова юлташ (лента тĕртекен фабрика) ВЛКСМ хула комитечĕн отчетĕнчи пысăк ситменлĕхсене палăртрĕ. ВЛКСМ хула комитечĕн секретарĕ Алфер юлташ тунă отчетлă доклад делегатсене тивĕçтерейменст. Партипе правительствăн историллĕ постановленийĕсене пурнăçа кĕртмелле тăвас ĕçре тесе комсомолăн хула комитечĕ мĕнле конкретлă ĕçсем туни çинчен отчетра асăнман. ВЛКСМ хула комитечĕ комсомол организацийĕсене конкретлă ертсе пыман. Султалăк хушшинче пуçламăш комсомол организаци секретарĕсемпе пĕр семинар та ирттерман. Иртнĕ отчетпа суйлав пухăвĕсенче 13 комсомол организацийĕн ĕçне çителĕксĕр тесе хак панă. ВЛКСМ хула комитечĕ вĕсен ĕçне кирлĕ пек ертсе пымасть.

Зимин, Варенов, Малахова тата Данилевский юлташсем хулари комсомол организацийĕнче çамрăксене идейăпа политика тĕлĕшĕнчен воспитани парас ĕç çителĕксĕр пулса пынине палăртрĕç. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче 10 политшкулпа кружок вĕренӳ программине пурнăçлайман. Уйрăм комсомол организацийĕсенче кăçалхи вĕренӳ çулĕ те йĕркеллĕн пуçланман, хăшпĕр çĕрте малтанхи занятисене пачах та ирттермен. ВЛКСМ хула комитечĕн секретарĕ Щепелева юлташ хулари комсомолецсемпе çамрăксен политикăлла вĕренĕвне лайăхлатма тăрăшмасть.

Нумай предприятисенчи çамрăксене темиçе уйăх хушши политикăлла темăсем тăрăх лекцисем вуласа памаççĕ. ВЛКСМ хула комитечĕ çумĕнче çамрăксен лекторине йĕркеленĕ пулнă. Анчах вăл пачах ĕçлемест. Штатра тăман докладчиксен йышĕ те сахал. Хула комитечĕ ку ĕçе комсомолецсен анлă активне хутшăнтарма тăрăшмасть. ВЛКСМ хула комитечĕн секретарĕсемпе бюро членĕсем çамрăксене лекцисемпе докладсем сахал вуласа параççĕ. ВЛКСМ хула комитечĕпе пуçламăш организацисем ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн XII-мĕш пленумĕ йышăннă постановление çителĕксĕр пурнăçласа пыраççĕ, çамрăксен вĕренĕвĕнчи ситменлĕхсемпе килĕшсе пыраççĕ. Çамрăк рабочисен шкулĕнче вĕренекенсенчен нумайăшĕ ĕлкĕрсе пырайманнине тата вĕренме пăрахнине çакăнпа кăна ăнлантарса пама пулать.

Аслă шкулсемпе техникумсенчи комсомол организацийĕсен ĕçĕнче те пысăк ситменлĕхсем пур. Экзаменсем памалли суркуннехи сессире педагогика институтĕнче 180 комсомолец пачăр паллăсем илнĕ. Вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайман 53 комсомолеца институтран кăларса янă. Ялхуçалăх институтĕнчи тата колхоз кадрĕсем хатĕрлекен вăтам шкулти комсомол организацийĕсем КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă решенисене пропагандăлас тĕлĕшпе пачăр ĕçлеççĕ. ВЛКСМ хула комитечĕн бюровĕ аслă тата вăтам шкулсенче вĕренӳпе воспитани ĕçне лайăхлатма тивĕçлĕ мерăсем йышăнмасть.

Нумай делегатсем ВЛКСМ хула комитетне культурăлла-массăлла тата физкультурăпа спорт ĕçне лайăхлатма сĕнӳсем пачĕç. Чинаев, Борозин тата ытти юлташсем «Çамрăк коммунист» хаçат ĕçĕнчи ситменлĕхсене палăртрĕç. Хаçат редакцийĕ авторсен активĕпе сахал ĕçлет, производствăра малта пыракансен опытне çителĕксĕр пĕтĕçтерет. Редакци работникĕсем производствăра сайра хутра кăна пулаççĕ, комсомолецсен ыйтăвĕсене тĕпчесе вĕренмеççĕ.

Конференци отчетлă доклад тăрăх решени йышăнчĕ, ВЛКСМ хула комитечĕн çĕнĕ составне тата республикăри конференцие кайма делегатсем суйларĕ.

• • •

ВЛКСМ хула комитечĕн пĕрремĕш пленумĕ хула комитечĕн секретарĕсем пулма Алфер тата Щепелева юлташсене суйларĕ.

Агрозоотехника курсĕсем пирки

СЕНТЕР. КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ çĕршыв умне пысăк задачăсем кăларса тăратрĕ. Пирĕн социализмла ялхуçалăхĕн тăван çĕршыв валли ялхуçалăх продукчĕсем султан-çул ытларах туса памалла.

Çак задачăна кĕске срокра тата анăçлăн татса парасси ялхуçалăх ĕçченĕсем малта пыракан агрономи наукине çине тăрса вĕреннинчен, наука вĕрентĕвĕпе тырпул тухăçне, çавăн пекех выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне ӳстерес ĕçре анлăн усă курнинчен нумай килет.

Малта пыракан агротехника çитĕнĕвĕсене ĕçе кĕртсе пырас тата колхозсенче кадрсем массăллăн вĕрентсе хатĕрлес ĕçре вис çуллăх агрозоотехника курсĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Çакна Сĕнтĕр районĕнчи партипе совет тата ялхуçалăх органĕсен руководителĕсем лайăх ăнланаççĕ. Апла пулин те колхозсенче агротехникăна вĕрентес ĕçе кирлĕ пек организацилемен.

Иртнĕ çул вис çуллăх курссенче пĕтĕм районĕпе те 206 çын кăна вĕреннĕ. Курссем малта пыракан «Колос», «Зара», «Çĕнĕ Юнкă» колхозсенче кăна йĕркеллĕ ĕçленĕ. Ытти колхозсенче вара нимĕнле курс та пулман.

Кăçал çак ĕçе тĕпренех лайăхлатасса кĕтмеллечĕ. Анчах ĕç пачах урăхла пулчĕ. Курссен çĕнĕ вĕренӳ çулĕ кăçал те чăтма çук начар пуçланчĕ. Агротехникăна вĕренме 15 ушкăн, зоотехникăна вĕренме 9 ушкăн организацилене. Вĕсенчен 8 ушкăнĕнче кăна («Колос», «Зара», «Знамя», «Çĕнĕ Юнкă», «Аврора» колхозсенче) занятисем йĕркеллĕ пуçланчĕç. «Коммунизм», «Слава», Мичурин ячĕпе тата Жданов ячĕпе тăракан колхозсенче вĕренме кирлĕ условисем туса памасăр курссенче занятисем йĕркеллĕ ирттермеççĕ. [illegible]

Халхи вăхăтра районти 15 колхозра агрономсем, 9 колхозра — зоотехниксем ĕçлеççĕ. Анчах вĕсенчен нумайăшĕ агрозоотехника курсĕсен ĕçне пуçарса ярас тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Сăмахран, Свердлов ячĕпе тăракан колхозра виççĕмĕш çул ĕнтĕ С. Григорьев агроном ĕçлет. Кашни çулах вăл колхозра «ялхуçалăх академийĕ» усасси çинчен калаçать. Чăннипе вара курс ĕçне те пуçарса яман. Çав вăхăтрах вуншар колхозниксем курсра вĕренме кăмăл тăваççĕ.

Мичуринла агрономи наукин вĕрентĕвне хăнăхнă колхозсем тырпула тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне ӳстерес ĕçре яланах пысăк çитĕнӳсем тăваççĕ. Колхозниксене агрозоотехника пĕлĕвне парассине хакламан колхозсенче вара тырпул тухăçлăхĕ начар, фермăсем те юхăнчăк.

«Колос» колхоз, сăмахран, кăçал кашни гектартан 20-шер центнер вĕрхи тулă, 17-шер центнер ыраш туса илчĕ. «Зара», «Çĕнĕ Юнкă», «Броневик» колхозсем те пысăк тырпул çитĕнтереççĕ. Асăннă колхозсенче обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата унăн тухăçлăхне ӳстерес енĕпе пысăк çитĕнӳсем тунă. Çак çитĕнӳсем хăйсем тĕллĕн пулман. Асăннă колхозсенче 200 çынна яхăн агрозоотехника курсĕсенче вĕренсе тухнă.

Çак вăхăтрах курссен ĕçне организацилемен, колхозниксене вĕрентессине хакламан колхозсенче ĕçсем начар урăхла тăраççĕ. [illegible]

[illegible]

[illegible]

Г. СЕРГЕЕВ.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ Чăваш АССР Министрĕсене уйăрса лартасси çинчен йышăннă Указсене çирĕплетесси çинчен

Чăваш Автономлă Совет Социалистлă Республикин Верховнăй Совечĕ [illegible]:

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ йышăннă çак Указсене çирĕплетет:

Чăваш АССР Суту-илӳ министрĕ пулма Петр Григорьевич Гаврилов юлташа уйăрса лартасси çинчен йышăннă Указа;

Чăваш АССР Апат-çимĕç [illegible] промышленноçĕн министрĕ пулма [illegible] юлташа уйăрса лартасси çинчен йышăннă Указа.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.
Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ Д. МИТЬКОВ.
Шупашкар хули, 1953 çулхи декабрĕн 12-мĕшĕ.

Аслă туслăха чысласа

КПСС Центральнăй Комитечĕ, ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕ тата СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ Украина Россиăпа пĕрлешнĕренпе 300 çул тултарнине анлăн паллă тума йышăннине республикăри ĕçсыннисем пысăк хавхаланупа кĕтсе илчĕç.

Çак кунсенче предприятисенче учрежденисенче тата колхозсенче агитаторсем Украина Россиăпа пĕрлешнĕренпе 300 çул тултарни тата çавна май КПСС Центральнăй Комитечĕ, ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕ тата СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ [illegible] çинчен калаçусем ирттереççĕ. Агитаторсем Украина халăхĕ Богдан Хмельницкий ертсе пынипе [illegible] кĕрешни, çак кĕрешӳре аслă вырăс халăхĕ пысăк пулăшу пани, Октябрьти Социализмла Аслă революци çĕнтернине ирĕк тупнă украина халăхĕ телейлĕ те пулăх пурнăçпа пурăнни çинчен каласа параççĕ.

Ялти библиотекăсенче клубсенче, вулавăшсенче [illegible] украина халăхĕн [illegible] Украина ССР-ĕн промышленноçĕ, ялхуçалăхĕ тата культура [illegible] стендсем [illegible] тунă.

Литература страници

Çамрăк писательсене ытларах пулăшмалла

Ĕнер, декабрĕн 15-мĕшĕнче, Чăваш республикинчи çамрăк писательсен виççĕмĕш канашлăвĕ уçăлчĕ.

Чăваш совет литератури çултан-çул ӳссе, аталанса пырать. Сакă вăл пирĕн литературăра çĕнĕ ятсем, çамрăк талантсем, творчествăлла çĕнĕ вăйсем куллен-кун хушăнса пынинчен лайăх курăнать. Вулакансем вĕсем çырнă произведенисене хапăлласа йышăнаççĕ.

Хăсан çамрăк поэтсем—Георгий Ефимовпа Макар Хури—хăйсем чи пирвайхи «Ахă» кĕнекисемпе халăх умне тухрĕç. Георгий Орлов, Александр Яльмаров, Мария Волкова тата ыттисем те хăйсен малтанхи сăввисене пичете пачĕç.

Анчах та çамрăк авторсене пăхса çитĕнтерес ĕç çителĕклĕ тесе калама пултаратпăр-и-ха эпир?

Çук, ун пек калама пултараймастпăр. Чылай çамрăк писательсем хăйсен произведенийĕсенче халăхн пысăк ыйтусенчен пăрăнса каяççĕ, пурнăçра паян тĕл пулакан тĕп конфликтсене асăрхаймаççĕ. Писсе çитмен, япăх çырнă произведенисене те пичетре час-часах курма пулать-ха.

Юлашки икĕ çул хушшинче çамрăк авторсенчен чылайăшĕ пысăкрах, паллăрах пĕр произведени те çырса параймарĕ-ха.

Паллăртас пулать, писатель-профессионалсем те çак çитменлĕхрен хăтăлса çитеймен. Кун пирки вара «Литературная газета» çак кунсенче питĕ тĕрĕс кăтартса пачĕ.

Мĕншĕн çапла пулса тухнă-ха?

Чи малтанах ку çакăнтан килнĕ: республикăри писательсен Союзĕ писательсен творчествăлла хастарлăхĕ чакма тытăнни çине пӳрне витĕр пăхать.

Чăваш совет писателĕсен Союзĕн правленийĕ, çавăн пекех комсомол организацийĕсем те час-часах çамрăк литераторсем çинчен манса каяççĕ. Çамрăк авторсем вара хăйсем тĕллĕн, пĕчченшерĕн ĕçлеççĕ. Вĕсене пухмаççĕ, вĕсем çырнă произведенисене секцисенче пăхса тухмаççĕ, профессионал-писательсем вĕсене творчествăлла пулăшу памаççĕ.

Çамрăк авторсем çине алă сулни çак фактран та курăнать. 1950 çулта Чăваш совет писателĕсен Союзĕнче çамрăк авторсемпе ĕçлеме ятарласа комисси тунăччĕ. Çав комиссие çамрăксен пултарулăхне ӳстерсе пыма хушнăччĕ. Унăн литературăра ĕçлеме пултаракан çамрăксене творчествăлла пулăшу памалла пулнă. Анчах та çак комисси (ăна А. Эсхельпе А. Башкиров-Талвир ертсе пынă) виçĕ çул хушшинче нимĕн те тумарĕ, урлă выртакана тăрăх та çавăрса хуман.

Çамрăк литераторсене Горький пек вĕрентсе, ăшшăн пăхса çитĕнтермелле, — çапла тума хушать писательсен организацийĕсене Коммунистсен партийĕ. Çавăнпа та çамрăк авторсем, çамрăк писательсем çине бюрократла пăхнине нихăçан та чăтса тăма юраманнать. Çапла пулин те, Чăваш совет писателĕсен Союзĕн правленийĕ тата çав правлени кăларакан «Ялав» журнал çамрăк авторсене ответ тата консультаци памасăр тăнисем сахал мар пулкалаççĕ.

Писатель-профессионалсен хăйсен ĕçри опытне çамрăксене парса пымалла, вĕсене вĕрентсе пыма тăрăшмалла. С. Эльгер, П. Хузангай, Я. Ухсай, Уйăп Мишши, Л. Агаков, С. Шавлы, А. Эсхель, А. Алга тата ытти писательсен çамрăксене ытларах пулăшмалла.

Чăваш совет писателĕсен Союзĕн çапла тумалла: çĕнĕ вăйсене, çамрăк писательсене хапăл туса йышăнмалла, вĕсен творчестви çине тимлĕн пăхас пулать, консультацисен пахалăхне хăпартмалла. Çамрăксене пăхса аталантарас ĕçе чи лайăх писательсене явăçтармалла, çамрăк авторсен паха произведенийĕсене хаçатсенче, альманахсенче тата «Ялав» журналта пичетлесе кăлармалла.

Çамрăк писательсене комсомол организацийĕсем пысăк пулăшу пама тивĕçлĕ. Комсомол комитечĕсем çамрăк авторсем мĕнле ӳссе, мĕнле вĕренсе пынине сăнасах тăмалла, вĕсен произведенийĕсемпе тата малашнехи ĕç планĕсемпе паллашас пулать, вĕсене мĕн кирлине тĕплĕн пĕлсе тăмалла.

«Ялав» журнал, «Тăван Атăл» тата «Дружба» альманахсем çамрăк литераторсемпе тата халĕ тин çырма пуçлакан авторсемпе çирĕп çыхăну тытмалла, вĕсене ĕçре пулăшмалла, вĕсем çырнă калавсемпе сăвăсене—лайăххисене — яланах пичетлесе пымалла.

Совет халăхĕ, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, хамăр çĕршывăмăрта пуренчен те çителĕклĕ, тулли те ырă пурнăç тăвас тесе пысăк задача пурнăçласа пырать. Çак чаплă ĕçсем тата ĕççыннисене коммунизмла воспитани парас енĕпе тумалли ĕçсем художествăлла литература умне пысăк задачăсем кăларса тăратаççĕ. Вĕсем пирĕн писательсене тата ытларах, тата тăрăшарах, лайăхрах ĕçлеме хушаççĕ.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн историллĕ решенийĕсем совет литератури мĕнле çулпа ӳссе аталанса пымаллине уççăн та татăклăн кăтартса пачĕç.

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезĕнче Г. М. Маленков юлташ совет çыннин шухăш-кăмăлĕпе культури ӳссе пынă çинчен, ăна парти литературăпа искусствăн чи лайăх произведенийĕсем урлă воспитани пани çинчен каларĕ. Совет çыннисем хăлтăрка, япăх, илемсĕр япаласене йышăнма пултараймаççĕ. Вĕсем хăйсен писателĕсемпе художникĕсене лайăх ĕçлеме, паха произведенисем пама хушаççĕ. Хăйсен произведенийĕсенче писательсем пурнăçри пур начар енсене, çитменлĕхсене тăрă шыв çине кăлармалла, ырă шухăш-кăмăллă, илемлĕ те паттăр чунлă çĕнĕ çынсен сăн-сăпатне яр-уççăн сăнласа кăтартса памалла. Çапла майпа вара хамăр обществăри çынсене кирлĕ мар йăласенчен хăвăртрах хăтăлма пулăшмалла.

Писательсен Союзĕ тата республикăри комсомол организацийĕсем çамрăк писательсен пурнăçне витĕр пĕлсе тăмалла, вĕсене марксизм-ленинизма вĕренме, хамăрăн аслă совет халăхне тивĕçлĕ произведенисем çырма пулăшса пымалла.

Иван МАРКЕЛОВ.

Тус-тăвансем

Эпир — телейлĕ тантăшсем,
Эпир — кĕрешӳре.
Эпир куллен тунă ĕçсем
Çирĕплетеç мире.

Ялта ĕçлет пĕр тусăм ман,
Пăтăнтарать тырпула:
Çĕр утмăлшар пăт гектартан
Пуçтарчĕ вăл çак çул.

Тепри ав Куйбышев енче
Асталăх кăтартать:
Вăл экскаваторпа пĕччен
Виç норма тултарать.

Тата пĕр тусăм—Хусанта,
Консерваторинче;
Вăл юрламашкăн пит ăста,
Юрлать телей çинчен.

Çĕршывăм! Санăн хуралçу,
Сан чикĕнти салтак—
Вăл-ман юлташăм;
Тăрать вăл хуралта.

Асталăхĕ художницăн
Пĕрмай ӳссе пырать.
Ман савнă хĕр вăл, çывăх сăн,
Çĕршыв сăнне çырать.

Пиччĕсĕм ман—Челябинскра:
Машин-савакансем,
Вăл халĕ пысăк заводра
Технолог-инженер.

Ман кӳршĕ тусăм—Мускавра,
Тăвать вăл çӳлĕ çурт.
Вăл паллă çын тĕп хулара—
Мухтавлă штукатур.

Таçта та пур ман тантăшсем,
Кашни—хĕрӳ ĕçре...
Эпир телейлĕ, юлташсем,
Эпир—кĕрешӳре!

Альберт КОЖАНОВ.

Çăлкуç

Ял хĕрринче, сăрт айккинче
Кашлаççĕ йăмрасем.
Чĕрĕкĕл—шыв валак çинчен
Сикет чĕнтĕрленсе.

Кĕвентине уртса, куллен
Кунта пĕр хĕр анать,
Кулли чипер, утти ĕлккен,
Ик куçĕ вăй вылять.

Ăна курсан сăл шывĕ пек
Тасалĕ кăмăлу...
Йăмра сулхăнĕнче ирпе
Аваннĕ тĕлпулу!

Шыв витрере вылянăçем
Пăхатăп хĕр çине.
Анчах пĕр кунхине пикем
Анмарĕ сăл умне.

Мĕскер-ши пулчĕ ман хĕре?
Ĕнер анчах мана
Каларĕ-çке: «Савать чĕре
Ялта сана кăна».

Эп кĕтрĕм сывлăм типиччен,
Килмерĕ çĕмĕрткуç.
Вăл кун шавларĕ пӳртсенче
Водопровод-çăлкуç.

Геннадий ЛИСИН.

Мускав,
Литинститут.

Поэзи çинчен пĕр-ик сăмах

Чăваш литературинче çак юлашки çулсенче чылай сăвăçсем палăрчĕç. Вĕсен шутĕнче Г. Ефимов, М. Хури, А. Клементьев, Кĕçĕн Васлейĕ тата ыттисем те.

Поэтсене пулăшу пани, хавхалантарни кирлĕ. Çакăн çинчен писательсен правленинче те, журналсен редакцийĕсенче те нумай калаçаççĕ. Анчах, темшĕн, хăшпĕр чухне çамрăксене кирлĕ пек пулăшу пани сисĕнмест-ха.

Çакна эпĕ хамăн ĕçре те аван куратăп. Эпĕ, хам çамрăках мар пулин те, творчество ĕçĕнче çамрăк-ха. Мана та творчество ĕçĕнче пулăшу кирлĕ. Анчах çавна питĕ сахал куратăп. 1948 çул мана çапла пĕлтерчĕç: сана чăваш халăх поэчĕ Я. Ухсай çумне çирĕплетрĕмĕр, вăл сана пулăшу парĕ, терĕç. Çакна писательсен правленийĕ тунă иккен. Анчах эпир Ухсайпа темиçе хут та тĕл пултăмăр, вăл ку япала çинчен пĕр сăмахпа та асăнмарĕ, пĕлмен пекех çӳрерĕ. Тепĕр хут тĕл пулсан, сăмах хускатрăм та, вăл «мĕн тумалла вĕсен решенийĕпе (писательсен союзĕн решенийĕ ĕнтĕ) çыр и все», терĕ. Тепĕр çулĕнче вара савăнăçлă хыпар кĕтсе илтĕм-илтĕмех. Мана «Сан творчествуна пăхса тухатпăр. Доклад тума А. Алга поэта уйăртăмăр»—терĕç. «Çитес кунсенчех йыхрав хучĕ ярса паратпăр, вара Шупашкара пĕр тăхтаса тăмасăрах тухса вĕçтер»—терĕç. Çакна писательсен правленин ун чухнехи ответлă секретарĕ А. Кăлган çырчĕ. Пысăк, ответлă çын вĕт. Ĕненесех пулать. Эпĕ Шупашкара хатĕрленме тытăнтăм, анчах та пустуях çыраççĕ иккен. Йыхрав хутне эпĕ ку таранччен те кĕтсе илеймерĕм.

Çак тĕслĕх ĕнтĕ писательсен правленийĕ çамрăк поэтсене пулăшу парас ĕçе формально туса пынине, решенисем хут çинче кăна юлнине пĕлтерет.

1951 çул, кĕркунне, эпĕ Шупашкарта ĕçлеме тытăнтăм. Хамăн пултарулăха аталантарма, чĕлхене вĕренме кунта аванрах пулĕ, терĕм.

Чăнахах та, Шупашкарта мана писательсем нумай пулăшу пачĕç. Эпĕ хамăн сăввăмсене хам пĕлнĕ чухлĕ туса çитерĕтĕп те, кама та пулин, паллăрах писателе, поэта кăтартатăп, вĕсем пană канашсене итлетĕп. Сакă, ман шутпа, питĕ ырă, кирлĕ япала. Пĕр-пĕрне пулăшсан, вĕрентсен, такам та пĕлет ĕнтĕ, пархатарлă ĕç. Анчах, тӳррипех калас пулать, поэзи секцийĕ хăйĕн ĕçне кирлĕ пек йĕркелесе яман-ха. Секцинче уйрăм поэтсен сăввисене сайра хутра кăна сӳтсе яваççĕ, секци ларăвĕсене çынсем сахал пухăнаççĕ. Сăмахран, çамрăк автора—Мария Волковăна илер. Вăл редакцисенче, Чăвашгосиздатра час-часах пулать, хăйĕн сăввисене пичетлеменшĕн ӳпкелешет. Çапах та ун сăввисене секцинче пăхса тухма шухăшламаççĕ-ха. Ман шутпа, Волковăна пулăшмаллах, мĕншĕн тесен писательсем хушшинче хĕрарăмсем сахал, вĕсене ку ĕçе явăçтарасси чылай хисеплĕ ĕç. Хăшпĕр çамрăк поэтсем тата темиçе çул хушши пĕр вырăнта «тăпăртатса» тăраççĕ, вĕсен урисене тăлласа хунă пекех туйăнать. Сăмахран, Петр Ялгир, Анатолий Анат, Алексей Афанасьев, т. ыт. те. Поэзи секци вĕсем çинчен мĕншĕн аса илмест? Мĕншĕн тĕпчесе вĕренмест вĕсен творчествине. Мĕншĕн татса ямасть вĕсем «капланса ларнă» пĕвене?

Вăрмар районĕнчи Вăтакас ялĕнче пирĕн тепĕр сăвăç—Кĕçĕн Васлейĕ пурăнать. Вăл сахал вĕреннĕ колхозник, çитменнине тата хăлхасăр. Ăна пулăшу кирлех ĕнтĕ, хавхалантарса пымаллах. Çапах та Кĕçĕн Васлейне пулăшу пани сисĕнмест. Ăна писательсен правленине чĕнсе те пулин калаçмалла, çакăншăн та савăнать вăл, хăйне хисеплениине сисет. Темшĕн çакна та тумаççĕ. Поэзи секцинче унăн творчествине пăхса тухасси вара та пулман.

Хăшпĕр писательсем, пулăшас вырăнне, ним шухăшласа тăмасăрах кирлĕ-кирлĕ мар сăмах персе яни те пулать. Çак ниме те мар пек ĕнтĕ, çапах та вăл творчество енĕпе «кĕçĕнрех» поэтсене кӳрентермеллинех кӳрентерет.

Нумай пулмасть «Коммунизм ялавĕ» хаçатра манăн «Октябрь» ятлă сăвă пичетленсе тухрĕ. Çав кун чылай юлташсем мана «аван çырнă», терĕç, кăшт урăхларах тумалла текенсем те пулчĕç. Чăваш халăх поэчĕ Я. Ухсай вара ним кĕтмен çĕртенех «эсĕ çутçанталăк çинчен мĕншĕн апла çыратăн?» терĕ те, урăх пĕр сăмах та каламарĕ. Эпĕ вара чылайччен шухăшларăм «ниушлĕ тĕрĕс мар?» Анчах та, ман телее, «Литературная газета» хаçатăн ноябрĕн 5-мĕшĕнчи номерĕнче Н. Грибачев сăвви пичетленсе тухрĕ. Вырăс поэчĕн сăввине вуланă хыççăн, эпĕ тинех лăплантăм. Ман шутпа, паллă писательсем лайăх, шухăшласа калаçсан аван пек туйăнать.

Тӳр сăмахăн суйи çук, теççĕ ваттисем. «Ялав» редакцинче те, «Тăван Атăл» альманах редакцийĕнче те юлашки вăхăтра сăвăсенчен хăракан пулчĕç. Сăвă кĕнекисене Росполиграфиздат та сахалтарах кăларма сĕнет. Çавăнпа Чăвашгосиздат вĕсене, чылайăшне, 1954 çулхи плантан кăларса пăрахрĕ. Тен, ку тĕрĕсех пуль ĕнтĕ, «сахал пултăр та пахалăхĕ лайăх пултăр», теççĕ пулас. Анчах планран çакна май çамрăк сăвăçсен кĕнекисене кăна кăларса сирпĕтрĕç. Çак «тасатăва» лекнĕ поэтсен шутĕнче Георгий Орлов та, Александр Яльмаров та, Петр Ялгир та тата ыттисем те пур. Мĕнрен килет-ха ку? Паллă поэтсем Аркадий Эсхель, Петр Хузангай хăйсен кивĕ сăввисене темиçе хутчен те пичетлесе кăлараççĕ. Çамрăксен вара пĕртен-пĕр кĕнеке кăларма та май çук. Çак япала, паллах, тĕрĕс мар. Ку вăл çамрăксен çулне юриех пӳлсе тăни пулать.

Писательсен правленийĕ ĕçĕ çинчен сăмах хускатсан, манăн тата акă çакăн çинчен калас килет. Писательсем час-часах рабочисемпе, колхозниксемпе, студентсемпе, ачасемпе тĕл пулаççĕ. Çав тĕлпулусене вара ялан тенĕ пекех пĕрисем çеç хутшăнаççĕ. Вĕсем — Уйăп Мишши, Александр Алга, Леонид Агаков, Петр Хузангай. Ăçта-ши вара ытти писательсем? Ăçта-ха Семен Эльгер, Кузьма Пайраш, Кузьма Тӳрхан, Илья Тукташ? Вунсăр пуçне тата халăх çамрăк авторсене курасшăн, ăçта-ши вĕсем? Писательсен правленийĕ çамрăксене ку ĕçре манса хăварнипе тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерет. Çамрăксене халăхран уйăрса кайма памалла мар, халăхпа тачă çыхăнса тăма вĕрентмелле.

Пирĕн çырмалли нумай, пирĕн пурнăç çав тери илемлĕ те пуян. Кашни ĕçрех, кашни пусăмрах поэзи çуталса тăрать. Çавăнпа та пирĕн ĕçлемелле, вĕренмелле. Çамрăк поэтсен çирĕппĕн малалла утмалла. Писательсен правленийĕн вара вĕсене пулăшса пымалла, ячĕшĕн кăна мар, чĕререн тăрăшса ĕçлемелле.

Василий АЛЕНДЕЙ.

Экипаж

Приказ. Ларăççĕ танкистсем
Хăватлă танк ăшне.
Тăм тивнĕ сарă çулçăсем
Ӳкеççĕ ун çине.

Вĕçтерчĕ, çулсăр мĕнĕрех,
Хăрушшăн малалла.
«Тăшман» вырнаçнă вĕтлĕхре
Ăна аркатмалла.

Çинпе кашлать кăлкаллă хир,
Хĕвел çĕре сăрлать.
Команда пачĕ командир:
— Ну, Павлов, аврăл!

Замок чанклатрĕ. Хатĕр тет,
Аврăлакан ăна.
Танкне тĕрĕмлĕпе ертет
Механик—старшина.

Наводчик ӳпĕнчĕ куллен,
Илет прицел, тĕллет.
Ухлатрĕ тупă. Мишенсем
Вĕçеççĕ çӳлелле.

Этĕр тăван çĕре асса
Инкек вутпа килсен,
Мишень пек вĕçĕç сывлăша
Çĕршыв тăшманĕсем.

Павел ВАСИЛЬЕВ.

Сар чаçĕ.

Атăл çинче

Ăшă çил ту енчен вăшт! вĕрет,
Шыва май сиккĕс хум хăвалать.
Утă çулнă çĕрте, ĕшнере,
Ĕç юрри çĕкленсе шăранать.

Вылять, сиккĕнсе ман умра
Сар хĕвелĕн шевли ярăнать.
Пĕр канмасăр куккук йăлăмра
Сассине чĕрене ăшăтать.

Сулхăнри айлăмсе шăрăхран
Яш кĕтӳçĕ пухать кĕтĕвне.
Сырантта ларакан ват йăмра
Хăй сăнне ӳкерет шыв çине.

Инçетрен, хула пек курăнса,
Атăл-Дон пăрахучĕ килет.
Шупашкар тĕлĕнче кăшкăртса,
Пристане йышăнма пĕлтерет.

Шавлă хум кăларса, анатран
Бензовоз чашкăрса хăпарать.
Мăн çуртсем ӳссе ларнă сăртра
Пĕлĕте кармашать комбинат.

Ав буксир пĕрене сулăпне
Сталинград енелле сĕтĕрет.
Ун çинчи сар хĕрсен юррине
Ăшă çил ман пата çитерет.

Çав юрра чунăмпа итлесе,
Ыр сунатăп тăван Атăла.
Ман умра ӳсекен сĕн ГЭС-сем—
Сĕн хавасăх çĕклет кăмăла.

Петр ВАШАВАТ.

Элексĕ çерçи

Юптару

Чĕвĕл-чĕвĕл сăмахмас Çерçи
Ĕмĕр пулнă кантăр хуралçи.
Ансăртран çак пĕчĕк чун
Хурлăх курчĕ иртнĕ эрнекун:
Ун ĕçне тирхĕрĕ Шăрчăкан,
Салакайăк тухрĕ хурахан.
— «Хире-хирĕç сăлăрна тăвар!»—
Çерçире хĕмленчĕ шăл-кăвар.
Пăпăр-апăр тытрĕ кăранташ:
«Уйăп кĕрсемччĕ, хурăнташ,
(Çапла чĕнчĕ юрăç Шăпчăка)
Пăрчăкан пĕтерчĕ шанчăка.
Пӳтсĕр чун вăл çакă çĕр çинче,
Çилĕ çеç ун хытă тĕрринче,
Юрри—юрă майлă мар,
Ташши—ташă майлă мар.
Вăл илен ыр кантăра.
Тустарать тăр кантăрла,
Шăпчăк тусăмçăм. Яка
Лектересчĕ капкăна.
Ĕç тухсассăн, эп сана
Чĕнĕп чаплă хăнана».
Пурнăçларĕ Шăпчăк тивĕçе:
Çав ĕçе
Тĕрĕслерĕ вырăна тухса,
Çырса хучĕ: «Пăрчăкан—таса».
Çерçи тытрĕ хăмăр кăранташ,
Шăнкăрча ят пачĕ «хурăнташ»,
Юрăç Шăпчăк ирĕкри çинчен
Шăнкăрч патне çырчĕ вăл ирччен,
Пурнăçларĕ Шăнкăрч тивĕçе:
Çав ĕçе
Тĕрĕслерĕ вырăна тухса,
Çырса хучĕ: «Шăпчăк—тап-таса».
Час-часах эпир те пурнăçра
Интăлетсĕр çакăн пек юрра.
Анчах темшĕн чĕвĕл Çерçисем
Татăлмаççĕ пирĕн [illegible]

Николай ПАХОМОВ.

Ăнланчĕ

Калав

Якур хальхинче те арăмĕн сăмахĕнчен иртеймерĕ.

— Калĕçĕ унта сана, тем те калĕçĕ. Ан кайнă пул колхоза. В отмĕ колхоза кай, а эпĕ анне патне пăрахса каятăп. Илтетни? Шутла. Иккĕрен пĕри пулать.

Якур аптрасах ӳкрĕ. Çук, вăл арăмĕн сăмахĕнчен иртейместех çав. «Тепĕр тесен, мĕншĕн çав териех хыпăнса ӳкес-ха? Колхозра халиччен мансăрах пурăннă, малашне те пурăнĕç-ха»,—тесе хучĕ те вăл картуçне тăхăнса картишне тухрĕ.

Картиш—сунтăх пек. Пĕри-тавра чус хăма витсе тунă хуралтăсем урлă «кайăк вĕçсе каçас çук», картишĕнче кăтиклетсе çӳрекен чăх-чĕпсем те кӳршĕсем патне пăрахса тарса, çăмарта туса хăварас çук.

Чĕнтĕрлĕ хапха айккинче пĕчĕк будка. Будка ăшĕнче, касмăкри йытă—«Дворник». Шаккамасăр никам та килсе кĕреймĕ.

Колхозра конюхра ĕçленĕ чухне, колхоз пулăшнипе çакăн чухлĕ туса çавăрнă çурт-йĕрне Якур куç тулли пăхса тăнă вăхăтра, арăмĕ крыльца çине тухрĕ те:—Якур, шкула чĕнеççĕ. Апат тусах кай, шăрттан ăшаларăм,—тесе чĕнчĕ.

...Виççĕмĕш çул ĕнтĕ Якур, колхозран пăрахса кайса, ялти çичĕ çул вĕренмелли шкулта конюх пулса ĕçлеме тытăнни. Ĕç йывăр мар. Укçа аванах параççĕ—ялта пурăнма ытлăн-çитлĕнех çитет.

Якур ялти ытти çынсем хушшинче—«интеллигент» шутĕнчех тăрать: ял Совет ларăвĕсене тăтăшах чĕнеççĕ: тĕрлĕ промартельсемпе комбинатсенчи начальниксемпе çыхăну тытать: директор ăна [illegible]

[illegible] Якур çак виçĕ çул хушшинче.

Анчах, ĕнер ăна колхоз председателĕ правленине чĕнсе илчĕ те, вĕсем хушшинче çакăн пек калаçу пулса иртрĕ:

— Ну, Егор Иванч, мĕн çĕмĕрттерсе пурнатăн ку чухне? Пĕртте килсе курмастăн-çке пирĕн пата,—терĕ председатель, ăна тенкел çине ларма сĕнсе.

— Пушă мар-çке, Семен Владимирович, пушă мар. Вĕренӳ çулĕ пуçланчĕ, анчах та, эпир халиччене шкул валли вутă турттарса хатĕрлемен-ха.

Председатель хура куç харши айĕнчен чеен çиçсе тăракан йăм хура куçĕсемпе Якур çине куларахăн пăхрĕ те, тӳрех ĕç çинчен калаçма пуçларĕ: — Вуттине ăна часах турттарса паратпăр. Тепĕр икĕ кунтан автомашинăсем пушанаç, лашасемпе те турттарма май пулать. Анчах, лашисене пăхакан çук-çке. Вася конюх армине кайрĕ. Ун вырăнне çын кирлĕ. Эпир сана, ĕлĕк те конюшра аван ĕçленĕ çын тесе, каллех конюх пулса ĕçлеме илесшĕн.

— Мĕнле апла? Ман вырăна кам ĕçлĕ вара? Эпĕ вĕт... стажпа,—ним калама аптраса ӳкрĕ Якур.

— Сан вырăнна çын тупăнать. Унта урăх çын та ĕçлеме пултарать. Эпĕ директорпа калаçса пăхрăм, вăл хирĕçлемест. Шухăшласа пăх.

— Темĕн, Семен Владимирович, пулмасть пулĕ. Пиллĕк çул ĕçлерĕм конюхра, унпа та çитĕ. Урăх çын тупăр.

— Мĕн хăратать-ха сана конюхра ĕçлеме? Эсĕ лашасене юрататăн.—Шкул валли икĕ пĕр хăтлăр-халтăр кĕсрене те аппа чĕртсе ятăн. [illegible]

Якур пĕр вăхăт хушши чĕнмесĕр, [illegible] шухăшласа ларчĕ те:—Арăмпа калаçса пăхам-ха,—терĕ,—мĕн калĕ. Çапах та, Семен Владимирович, стаж... Мана шкулта та юратаççĕ...

— Ничего-о,—терĕ председатель,—колхозра та эсĕ каллех хисеплĕ çын пулатăн. Ну, мĕнех вара. Калаçса пăх арăмупа, сӳтсе явăр çапах та. Егор Иванч, колхоза каялла таврăнса эсĕ нимĕн те çухатмастăн. Эсĕ—колхозшăн усăллă çын пулатăн. Пыр, кайса калаç та, ырансенче килсе, ĕçе тытăнма тăрăш.

Акă ĕнтĕ, халĕ, арăмĕпе вĕри апат умĕнче калаçнă хыççăн, колхоз çинчен пачах та шухăшлама пăрахмалли уççăнах палăрчĕ. Якур шкула тухса утрĕ.

— Егор Иванч,—терĕ ăна директор, шкул канцелярине пырса кĕнĕ-кĕменех,—вутă турттарас пирки мĕн шутлатăн эсĕ? Чуп, колхоза кайса калаçса кил. Хăçан турттарса пама шутлаç вĕсем?

Якур директора: «Ĕнерех колхоз правленине çав ĕç пирки кайса калаçрăм», тесе пĕлтерчĕ.—Анчах та вĕсем ман кӳлле вăлта ярасшăн-ха. Мĕн тумалла-ши, Матвей Петрович?—йăпăлтатса ыйтрĕ вăл директортан.

— Ăнланайманăм... Ăна-а,—терĕ директор, аса илсе,—çапла, çапла. Сана конюха илесшĕн. Кун пирки эпĕ нимĕн те калаймастăп вара. Эпĕ сана хăваласа яма пултараймастăп. Хăвăн ирĕкӳ. Председатель мана каларĕ те, эпĕ нимех те шаралаймарăм «Кирлех пулсан—кайăр», терĕм çеç. Кунта сан вырăнна кĕме хут та çырса пачĕ ĕнтĕ. Тураев Алексей—инвалид, алли çук, анчах, кунта ĕçлеме пултарать-ха вăл. Кăмăлу мĕнле çав,—эпĕ чармастăп.

Çак сăмахсене илтсен, Якур [illegible]

— Центральнăй Комитет Пленумĕн постановленийĕ хыççăн [illegible] колхозсене таврăнни çинчен хаçатсенче нумай çыраççĕ. Сăнӳкерчĕкĕсене те пичетлесе кăлараççĕ. Эсĕ специалист мар та, çапах та, тӳрех калам, колхоза кирлĕ çын, Егор Иванч. Хуçалăх тесен, эпĕ чарса тăрасси çук.

«Ял Совет председателĕ патне кайса калаçас-ха,—тен вăл çăлса хăвараймĕ. Ахальтен кум туман вĕт эпĕ ăна»,—шухăшларĕ Якур, шкултан вак-тĕвек ĕçсене туса пĕтерсен.

Çанталăка кăç сулхăнĕ çапма пуçларĕ.

Ял Совечĕ умне пĕр ушкăн арçын пухăнса тăнă. Вĕсем тем çинчен хаваслăн шуйхашса калаçнине Якур аякранах илтрĕ.

— Пăхăр-ха, кама куратăп! Егор Иванч килет! Манăн фронтри юлташăм...,—терĕ те пĕри, ушкăнран уйрăлса, аллисене малалла тăсса, Якур хирĕç утрĕ.

— Степан? Ак япала, мĕнле кайпа килсе лекрĕн пирĕн яла? Шупашкарта ĕçлет тенĕ пек илтнĕччĕ сан çинчен. Командировкăна килнĕ пулĕ-ха.

— Тăван колхоза ĕçлеме килтĕм. Çул май, акă, кăштах сирĕн ялăра курса тухас терĕм. Кăç та пулса килет, тейĕп, çĕр выртсах кайма та тивет пулĕ.

— Хам пата килтĕр. Ниçта та ямастăп, хам пата... Курманни миçе çул, калаçар-ха пĕрре, кăмăлсем туличчен,—терĕ те Якур, хăна чăматанне ярса илчĕ. Ушкăнра тăракан ял Совет председательне те вăл, «калаçса ларма пыр» тесе, чĕнсе хăварчĕ.

...Якур арăмĕ — Униççе аппа, сĕтел çине [illegible] те, апат хыççăн ĕçкелесе ларма тесе, сăра [illegible].

— Çапла вара, тăван колхоза агроном пулса ĕçлеме килнĕ терĕм. Министерствăран сахалăн мар туса кайрĕç эпир. Пурте—колхозсене. Тăрăшса ĕçлесен, пысăк ĕçсем тума пулать çакăн чухлĕ вăйпа. Ялхуçалăхне [illegible] пулсан, пирĕн çак ĕçе пурнăçламаллах, — вĕçлерĕ сăмахне, Якур хăни, Степан.

Якур, ун калаçнине итлесе, пĕр [illegible] Униççе аппа та, сĕтел çине тăтăшах пырса пăхса, темиçе хутчен те урай варрине тăрсах хăна калаçнине тимлерĕ. Ун калаçăвĕнчен вăл çĕршывра, уйрăмах колхозсен пурнăçĕнче пысăк улшăнусем пулассине туйса илнĕ пек пулчĕ.

Тул енчен алăка шаккарĕç. Якур хирĕç тухрĕ те, хăйпе пĕрле тăван шăллĕне, районра вăлă зоотехник пулса ĕçлекен Виталине, ертсе кĕчĕ.

— Ну, пичче, сан патна пурăнмаллах куçса килтĕм. Пĕр пӳлĕмпе мана паратăн пулĕ. Эпĕ ахаль тумăп, уйăхран уйăха тӳлесе тăрăп,—шавласа, алă тытса тухрĕ вăл пӳртрисене.

— Мĕн тата, ĕçрен кăларса ячĕç-им?—тĕлĕнсе ыйтрĕ пиччĕшĕ.

— Кăларса ямарĕç, хам килтĕм. Пурнăçран юлас мар, терĕм. Колхоза зоотехник пулса ĕçлеме килтĕм.

Кĕтмен çĕртен Якурпа арăмĕн куçĕсем тĕлме-тĕл пулчĕç. Вĕсем пĕр-пĕрин çине тĕлĕнсе, вăтанса пăхрĕç.

Якур пуçĕнче паян курса-илтнĕ хыпарсем, Степан калаçнă сăмахсем пăлханма пуçларĕç. Çав вăхăтрах ун пуçне директор: «Эсĕ специалист мар» тенĕ сăмах çивĕч сăпă пекех кĕрсе, тăрăнса ларчĕ.

«Мĕнле майпа «специалист мар» пулса тăтăм-ха эпĕ çав директоршăн? Эпĕ специалист мар-и? Халь ман пек конюх таврари [illegible] те сахал. Кăтартăп-ха эпĕ ăна, хамăн специальноçа, [illegible]... Анчах, арăм»...—вăл каллех арăмĕ çине пăхса илчĕ. [illegible]

— Пирĕнпе те колхоза чĕнеççĕ-ха. Тен чăнахах ĕнтĕ,—тесе хучĕ вăл. Якур кĕтмен çĕртенех.

— [illegible]—тесе хучĕ Якур.

Илья МИХАЙЛОВ.

Чĕрӳне ӳссамччĕ

[illegible]

Китайри промышленноçăн çитĕнĕвĕсем

ШАНХАЙ, декабрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Продукци туса кăларассине ÿстерессишĕн тата перекетлĕх режимне пурнăçласа пырассишĕн кĕрешсе, Хĕвелтухăç Китайри заводсем, фабрикăсем, шахтăсемпе транспорт предприятийĕсем çулталăкри производство планĕсене срокчен тултарса пыраççĕ. Ĕнер хаçатсем çапла пĕлтернĕ: Шанхайри машинăсем тăвакан, электричество моторĕсем тăвакан, металлурги, хими предприятийĕсем тата ытти сем — пурĕ 23 предприяти — çулталăкри заданисене 1—2 уйăх маларах тултарнă.

Паян «Цзефанжибао» хаçат промышленность предприятийĕсем тунă çĕнĕ çитĕнÿсем çинчен çырать. Хĕвелтухăç Китайри чылай заводсемпе шахтăсем, уйрăммăн илсен, Сучжоури тимĕр рудникĕсем, Цзинаньри станоксем тăвакан завод, Шандуньри çĕр кăмрăк кăларакан хăшпĕр шахтăсем тата ытти предприятисем çулталăкри заданисене срокчен тултарнă.

Польшăра металлурги промышленноçĕ аталанать

ВАРШАВА, декабрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Польшăра «Новая Гута» комбинат, «Варшава» ятлă металлурги завочĕ тата ытти металлурги предприятийĕсем тăваççĕ. Çакăнпа пĕрлех кивĕ металлурги завочĕсене çĕнетсе ураăхлатас ĕçе пурнăçласа пыраççĕ. Бу вăл металл шăратса кăларассине ÿстерме май парать. Çапла, кăçал, 1938 çулхипе танлаштарсан, чугун шăратса кăларасси 2,5 хут ÿснĕ.

1953 çулта Ченстоховри Болеслав Берут ячĕпе тăракан металлурги комбинатĕнче икĕ пысăк домна кăмакине ĕçе янă. Вĕсене тунă чухне техника юлашки вăхăтра тунă çитĕнÿсемпе усă курнă.

«Покуй» ятлă металлурги комбинатĕнче (Силези) çак кунсенче çĕнĕ мартен кăмакине ĕçе янă. Ун валли кирлĕ оборудование Совет Союзĕнчи заводсем ярса панă.

Болгарири хуласен сăн-сăпачĕ улшăнать

СОФИЯ, декабрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Болгари телеграф агентстви çапла пĕлтерет:

Кюстендил хули çултан-çул илемленсе пырать. Кунта илемлĕ çуртсем нумай лартнă. Хулара обществăлла çĕнĕ çуртсем, кану çурчĕсем, вăл шутра чугун çул работникĕсем, сутĕçпе пичет работникĕсем тата ытти работниксем валли кану çурчĕсем туса лартнă. Халĕ шахтерсем валли санатори тăваççĕ. Çĕршыва ирĕке кăларнă хыççăн хулара 106.000 тăваткал метр лаптăк йышăнакан урамсене чул сарнă, çĕнĕ водопровод тунă, пиншер йывăç лартнă.

Кюстендил хули чи лайăх курорт пулса пырать.

Америка енĕ Паньмыньчжоньри калаçусене чарса лартнă

Корейăпа Китай делегацийĕ пĕлтерни

ПЕКИН, декабрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Паньмыньчжоньри канашлура Корейăпа Китай делегацийĕ пĕлтернине панă. Пĕлтернинче çапла каланă: декабрĕн 12-мĕшĕнче Америка представителĕ Артур Дин ларусем ирттермелли залран тухса кайнă. Вăл Корейăра политикăлла конференци пухассипе çыхăннă ыйтусем тăрăх ирттерекен калаçусене паллă мар вăхăтлăха чарса лартнă.

Лару пуçламăшĕнче Корейăпа Китай енĕн представителĕ Ки Сук Бок тухса каланă. Вăл конференцире сасăламалли йĕрке çинчен Америка енĕ панă сĕнĕве йышăнман. Америка представителĕ, тенĕ вăл, çапла сĕннĕ: политикăлла конференцире решенисем йышăннă чухне кашни енĕн пĕтĕмĕшле пĕр пулса сасăламалла, Америка енчи государствăсен шутĕнчен çав решенисемпе килĕшнĕ тата вĕсем çине алă пуснă государствăсем çеç ку решенисене обязательно пурнăçлама тивĕçлĕ. Ку вăл çакна пĕлтерет: тепĕр енĕ, пĕтĕмĕшлĕ пĕр пулса, ют çĕршывсен çарĕсене Корейăран илсе тухма палăртакан сĕнÿшĕн сасăланă пулсан та, США правительстви çав сĕнĕве пурнăçламасăр тăма пултарать, ку сĕнĕве ырламастăп, çавăнпа та хамăн çарсене Корейăран илсе тухмастăп, тесе калама пултарать. Тепĕр енĕ Корея ыйтăвне мирлĕ майпа татса пама килĕшес пулсан та, Кăнтăр Корея правительстви çакăнпа килĕшменни çинчен пĕлтерме пултарать, вăл решение пурнăçлама килĕшмесĕр тăма пултарать. Апла пулсан, Америка енĕ конференцире йышăннă решенисене мĕнле майпа пурнăçлама пултарать-ха?—тесе ыйтнă Ки Сук Бок.

Дин, калаçусенче 17 государство представителĕ пулса тăраканскер, — тенĕ Ки Сук Бок, уйрăм условисем лартса нейтральнăй государствăсене конференцие чĕнме килĕшет. Çав вăхăтрах Кăнтăр Корейăн (Дина ĕненес пулсан, Дин çав çĕршывăн представителĕ те пулса тăрать), ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ мĕнле те пулин нейтральнăй государство политикăлла конференцие хутшăнассине хирĕç татăклăн протестлет. Камăн сăмахне ĕненмелле-ха? Дин сăмахне е Кăнтăр Корейăн ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн сăмахне?

Дин ун умне лартнă ыйтусем çине ответ парассинчен пăрăннă, ун вырăнне вăл Корейăпа Китай енĕ çинчен элеклĕ сăмахсем тухса каланă.

Корейăпа Китай енĕн представителĕ Хуан Хуа çапла каланă: Дин ун умне лартнă ыйтусем çине ответ пама пултараймасть, мĕншĕн тесен ку вăл Америка енĕн тĕллевĕсене уççа панă пулĕччĕ. Америка енĕн тĕллевĕ вара çакăн пек: уйрăм государствăсене политикăлла конференцин решенийĕсене пурнăçлассинчен пăрăнма май памалла тата çак государствăсем валли малалла сĕмсĕр ĕçсем тума условисем туса памалла.

Иккĕмĕш хут тухса каланă чухне Дин Корейăпа Китай делегацине хăйĕн «сĕнĕвĕн проектне» йышăнтарма хăтланнă, унăн сĕнĕвне йышăнмасан, калаçусене чарса лартассипе хăратнă. Ĕç тухманнине кура, Дин ларусем ирттермелли залран тухса кайнă, калаçусене паллă мар вăхăтлăха чарса лартнă.

Америка представителĕ хăйне мĕнле тыткалани Америка енĕн талçанах шухăшласа хунă планĕсене уçса палăртать. Америка енĕн планĕ—канашлăва чарса лартасси. Çакăн пек ĕçсем туса, Америка енĕ Корейăпа Китай енне хăратма тата политикăлла конференцие пухассине чарса лартма кăлăхах хăтланать. Америка енĕ Корейăпа Китайăн тыткăна лекнĕ 20 пин ытла çар çыннине ирĕксĕр тытса чарма тата тĕнчери çĕршывсем хушшинчи çыхăнусенчи йывăр лару-тăрăва сыхласа хăварма тăрăшать.

Агрессиллĕ Атлантика блокĕн Совечĕн сессийĕнче

ПАРИЖ, декабрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян Парижра Çурçĕр Атлантика блокĕн Совечĕн сессийĕ уçăлнă. Сесси ĕçне агрессиллĕ Çурçĕр Атлантика блокне кĕрекен çĕршывсен ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсем, оборона тата финанс министрĕсем хутшăнаççĕ. Сессин кун йĕркинчи пĕррелĕш ыйту—1953 çулхи апрель уйăхĕнче пулнă сесси хыççăн туса ирттернĕ ĕçсем çинчен Çурçĕр Атлантика союзĕн организацийĕн генеральнăй секретарĕ Исмей лорд тăвакан доклад.

Исмей лорд ĕнер пресс-конференцире çапла пĕлтернĕ: вăл сессире тăвакан хăйĕн докладĕнче «Европăри оборона пĕрлешĕвĕ» («Европа çарĕ».—Ред.) çинчен тăракан договора хăвăртрах çирĕплетме кирлине палăртĕ. «Европăри оборона пĕрлешĕвĕ,—хушса хунă Исмей,—Хĕвеланăç Германие Çурçĕр Атлантика союзĕ валли пысăк ĕç тума май паракан чи лайăх плап пулса тăрать».

Американецсем Японире хуçаланаççĕ

ДЕЛИ, декабрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). «Блитц» журналăн специальнăй корреспонденчĕ Токиоран пĕлтернĕ тăрăх, Америка çарĕсен Инçет Хĕвелтухăçĕнчи командованийĕ Японире забастовкăсем ÿсе пынишĕн пăшăрханать. Забастовкăсем Америкăна хирĕç пыракан демонстрацисем пулса тăраççĕ. Çакăн пек забастовкăсен ан пулччăр тесе, Америка командованийĕ ĕçшĕн çĕнĕ йĕркепе тÿлеме йышăннă.

Çак система тăрăх, кăтартса парать корреспондент, Америкăн гарнизон çарĕсем валли ĕçлесе тăракан Японири рабочисене «рабочи отрячĕсене» пĕрлештермелле. Вăл отрядсем барансене вырнаçмалла, вĕсене Америка командованийĕ ирттсе пымалла. Çак отрядсен членĕсен палăртнă срокран маларах хăйсен ĕç вырăнне улăштарма тата ĕç кунĕн вăрăмăшне улăштарма требовани лартма пултараймаççĕ. Рабочисем мĕн чухлĕ ĕçлемелли нормăна, ĕç укçине тата штрафсене американецсем палăртаççĕ. Америкăн çар командованийĕн Японири рабочисем тĕлĕшпе йышăннă решенийĕсене улăштарма пултараймасть. Çак отрядсен членĕсен профсоюзсене кĕме право çук.

Çакăн пек çĕнĕ система тунине Америкăпа Япони тăвакан ĕçлев контракчĕ çунпа хушса «законлă йĕркепе» çирĕплетеççĕ. Халĕ Америкăпа Япони ĕçлев контрактне тăвасси çинчен Америка командованийĕпе Иосида правительстви хушшинче калаçусем пыраççĕ.

ЯПОНИРИ ШАХТЕРСЕН ЗАБАСТОВКИ

ПАРИЖ, декабрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Парижра радио, Токиоран илнĕ хыпар тесе, çапла пĕлтернĕ: паян Японири 60 пин горняк забастовка пуçланă.



Демократиллĕ Корея Халăх Республики. Республика столицинĕ—Пхеньян хулине вăрçă вăхăтĕнче американецсем питĕ хытă ишĕлтернĕ. Вăрçă чарăннă хыççăн хулари çуртсене, водопровода, электричество линийĕсене юсаççĕ. Хулара пиншер пурăнмалли çуртсем тунă.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Пхеньян хулинче пурăнмалли çуртсем тунă çĕрте.

Синьхуа агентствин фотоÿкерчĕкĕ.

Корейăри Пĕрлĕхлĕ демократиллĕ отечественнăй фронтăн Центральнăй Комитечĕ пĕлтерни

ПХЕНЬЯН, декабрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Корейăри Центральнăй телеграф агентстви Корейăри Пĕрлĕхлĕ демократиллĕ отечественнăй фронтăн Центральнăй Комитечĕ Америка агрессорĕсем Корея Халăх çарĕн боецĕсемпе офицерĕсем тĕлĕшпе тунă тискер ĕçсем çинчен пĕлтернине пичетлесе кăларнă.

Америка интервенчĕсем, тенĕ пĕлтернинче, пĕтĕм тĕнчери правăн пурте йышăннă нормисене сĕмсĕррĕн пăсса, Корейăра халиччен историре пулман преступленисем тунă.

Корейăн Пĕрлĕхлĕ демократиллĕ отечественнăй фронтăн Центральнăй Комитечĕ тыткăнран таврăннă нумай çар çыннисенчен çырусем илнĕ. Тыткăнри çар çыннисем Америкăн лагерĕсенче пулса иртнĕ халиччен илтмен тискер ĕçсем çинчен каласа параççĕ. Тĕплĕн тĕпчесе пĕлнĕ тăрăх, Корейăри Пĕрлĕхлĕ демократиллĕ отечественнăй фронтăн Центральнăй Комитечĕ çакăн пек выводсем тăвать:

1. Америка интервенчĕсем, тыткăнри çар çыннисем тĕлĕшпе тискер ĕçсем туса, тыткăнри çар çыннисене мĕнле пăхмалли çинчен Женева хулинче йышăннă килĕшĕве, çавăн пекех пĕтĕм тĕнчери правăн пурте йышăннă нормисене пăснă. Çакна пурне те паллă фактсем çирĕплетсе параççĕ. Ун пек тискер ĕçсем Америкăн мĕнпур лагерĕсенче унта тыткăнри çар çыннисем пурăннă вăхăтра яланах пулнă.

2. Америка агрессорĕсен тискер ĕçĕсем ăнсăртран пулман. Вĕсем организованно тата план тăрăх нумай çĕрте пулса пынă, халĕ те пулса пыраççĕ. Тыткăнри çар çыннисене йышлăн вĕлерни тата вĕсене хĕсĕрлени Америка çарĕсем контроллесе тăракан кашни лагерьтех пулнă.

3. Америка агрессорĕсемпе Ли Сын Ман шайкки тыткăнри çар çыннисем тĕлĕшпе тунă тискер ĕçсем халиччен илтмен тискерлĕхпе палăрса тăраççĕ.

Корея Халăх çарĕн тыткăна лекнĕ боецĕсемпе офицерĕсене вĕлерес шутпа Америка агрессорĕсем тем тĕрлĕ тискер меслетсемпе те усă курнă: вĕсене танксемпе таптаса вĕлернĕ, вĕри шывпа пĕçертнĕ, йытăсемпе тулăттарнă, вăсăпа тата сивĕпе асаплантарнă. Тыткăнри çар çыннисене ыйтса тĕпченĕ чухне вĕсене чи хăрушă майпа асаплантарнă. Хĕрарăмсенчен питех те хытă мăшкăлланă.

Америка интервенчĕсем тыткăнри çар çыннисем тĕлĕшпе тунă мĕнпур преступленисем, тенĕ малалла пĕлтернинче, çарпа политика тĕллевĕсемпе çыхăннă. Хăратса, асаплантарса тата вĕлерсе, американецсем тыткăнри çар çыннисене ирĕксĕр тытса чарнă, вĕсене хăйсен çĕршывне таврăнма килĕшменни çинчен калама хушнă. Тыткăнри çар çыннисене Ли Сын Ман шайкки аллине вăрçăра вилсе пĕтме панă.

Американецсем тыткăнри çар çыннисем хушшинче ирсĕр пропаганда туса пынă. Тыткăнри çар çыннисен ÿчĕсем çинче вăйпа татуировка туса провокациллĕ лозунгсем, сăмахсем çырнă, ÿкерчĕксем тунă.

Американецсем тунă тискер ĕçсене, паллă тунă пĕлтернинче, уйрăм тапхăрсем çине пайлама пулать. Кашни тапхăрăн хăйĕн уйрăмлăхĕ пур. Тискер ĕçсен малтанхи тапхăрĕ 1950 çулхи декабрь уйăхĕнчен пуçласа 1951 çулхи февраль уйăхĕччен шутланать. Çак тапхăрта американецсем тыткăнри çар çыннисене ирĕксĕр тытса чарма хатĕрленнĕ. Çав вăхăтрах американецсем тыткăнри çар çыннисемпе тĕрлĕ йышши хĕспăшалсене сăнаса пăхнă çĕрте усă курнă.

1951 çулхи февраль уйăхĕнчен пуçласа 1952 çулхи июль уйăхĕ хушшинчи вăхăт—американецсем тунă тискер ĕçсен иккĕмĕш тапхăрĕ шутланать. 1951 çулхи февраль уйăхĕнче тыткăнри çар çыннисене Кочжедо утравĕ çине куçарма тытăннă. Иккĕмĕш тапхăр Корея Халăх çарĕн тыткăна лекнĕ çар çыннисене вĕлересси тата асаплантарасси ÿсниппе палăрса тăрать. Хăйсен çĕршывне таврăнма ан килĕшчĕр тесе, американецсем 1952 çулхи июль уйăхĕнчен пуçласа тыткăнри çар çыннисем хушшинче пропаганда туса пыма тытăннă.

1952 çулхи июнь уйăхĕнчен пуçласа тыткăнри çар çыннисене репатриаци тăвиччен — американецсем тунă тискер ĕçсен виççĕмĕш тапхăрĕ пулса тăрать. Тыткăнри çар çыннисен çарĕн шухăшкăмăлне нимĕнле вăйпа та куçма май пулманнине ăнланса, тыткăнри çар çыннисене хăйсен çĕршывне таврăнма чăрмантарас, Кăнтăр Корейăра хăварас шутпа, американецсем çак тапхăрта чи тискер ĕçсем тума тытăннă, тыткăнри çар çыннисене хĕсĕрленĕ, вĕсенчен мăшкăлланă. Ку тапхăр лагерьсенчи террор уйрăммăнах вăйланнипе, тыткăнри çар çыннисене йышлăн вĕлернипе тата асаплантарнипе палăрса тăрать.

Çакна та палăртса хăварни кирлĕ: тыткăнри çар çыннисем тĕлĕшпе тунă тискер ĕçсем пĕр хутчен, ăнсăртран тунă преступленисем пулса тămаççĕ, тенĕ пĕлтернинче. Пачах урăхла: çак тискер ĕçсемпе хĕсĕрлÿсене тĕплĕн хатĕрлесе тунă, вĕсене план тăрăх туса пынă. Тискер ĕçсем тунă çĕре пысăк çар чинĕсем хутшăннă. Вĕсем тискер ĕçсем тума ятарласа вĕреннĕ.

Преступленисем нумай пулни çинчен фактсем кăтартса параççĕ. Тыткăнран таврăннă çар çыннисем тăратнă материалсем тăрăх кăна Корея Халăх çарĕн тыткăна лекнĕ çыннисене 33.600 çын ытла вĕлернĕ. Аманнисемпе суранлатса пĕтернисен хисепĕ темиçе вунă пин çын шутланать.

АДЕНАУЭР БОНН КОНСТИТУЦИНЕ УЛĂШТАРМА ШУХĂШЛАТЬ

БЕРЛИН, декабрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). «Нейес Дейчланд» хаçат Бонран пĕлтернине пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă: Бонн бундестагĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, Аденауэр бундестагăн 1954 çулхи январĕн 14-мĕшĕнче пулмалли ларăвĕнче Хĕвеланăç Германи конституцине улăштарас тĕлĕшпе дебатсем пуçлама шухăшлани паллă пулнă. Конституцие улăштарса, Бонн правительстви Хĕвеланăç Германи çарне уççăнах тума май пулĕ тесе шанса тăрать.

Хамăр республикăра

Планран ирттерсе 4 миллион тенкĕлĕх продукци

Чăваш АССР Апат-çимĕç таварĕсен промышленность министерствине пăхăнса тăракан чылай предприятисем продукци туса кăлармалли çулталăкри плана срокчен тултарчĕç. Шупашкарти макарон фабрики, сăра завочĕ, Етĕрнери çу завочĕ, Çĕмĕрлери арман уйрăмах лайăх ĕçлеççĕ. Районсемпе хуласенчи апат-çимĕç комбиначĕсенчен вуниккĕшĕ производство планне ăнăçлă тултарнă. Малта пыракан предприятисем кăçал планран ирттерсе 4 миллион тенкĕлĕх продукци туса кăлараççĕ.

Хăшпĕр предприятисем продукци пахалăхне лайăхлатнă, çĕнĕ йышши апат-çимĕç туса кăларма тытăннă. 1954 çулта республикăра апат-çимĕç таварĕсем туса кăларасси чылай ÿсет.

Г. ЗЕЛЕНОВ,
Апат-çимĕç таварĕсен промышленность министерствин план пайĕн начальникĕ.

Рационализаторсем

Çĕмĕрлери йывăç япаласем тăвакан заводра, рационализаторсен хисепне ÿстерес, вăсен сĕнÿсене хăвăртрах пурнăçа кĕртес тесе, октябрĕн 10-мĕшĕнче ноябрĕн 30-мĕшĕ хушшинче обществăлла смотр ирттернĕ. Смотр вăхăтĕнче рационализаторсемпе изобретательсен хисепĕ чылай ÿснĕ. Г. Петров, Б. Чупраков, С. Юдин, П. Зубрилин рабочисем уйрăмах паха сĕнÿсем панă.

Халĕ заводра ĕçлекен кашни саккăр çынтан пĕри—рационализатор е изобретатель. Юлашки вăхăтра рабочисем, инженерсемпе техниксем, мастерсем пĕрлешсе паха сĕнÿсем пама тытăнчĕç. Панă сĕнÿсене пурнăçлани завода кăçал çур миллион тенкĕлĕх чĕртавар, материалсем тата укçа-тенкĕ перекетлеме, ĕç тухăçлăхне чылай ÿстерме, йывăр ĕçсене механизацилеме май парать.

Инженерсемпе техниксем рационализаторсемпе изобретательсене тĕтăшах консультаци параççĕ, сĕнÿсене çырса йĕркелеме пулăшаççĕ, çĕнĕ темăсем палăртаççĕ.

Рационализаторсемпе изобретательсен тавракурăмĕпе техникăлла пĕлĕвне ÿстерме ятарласа курс организациленĕ. Унта 25 çын вĕренет. Халиччен çичĕ занятии ирттернĕ. Курсра пурĕ 52 сехет вĕренмелле. Лекцисем вулас, практикăлла занятисем ирттерес ĕçе чи лайăх инженерсемпе техниксене хутшăнтарнă. Занятисем ирттерекен пÿлĕмре нагляднăй пособисем, тĕрлĕ хатĕрсем çителĕклĕ. Курсра чертежсем, техникăлла расчетсем тума вĕрентеççĕ.

Рационализаторсем производствăра паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Пиллĕкмĕш пилĕкçуллăх пуçланнăранпа Чупраков юлташ 5,5 çулхи, В. Серов юлташ—5,1 çулхи ĕç нормине тултарнă.

Г. ИВАНОВ.

Г. Лебедевăн творчествăлла каçĕ

Çак кунсенче Чăваш АССР искусствин сен тава тивĕçлĕ деятелĕ Г. Лебедев композитор искусство енĕпе ĕçлеме пуçланăранпа 20 çул тултарчĕ.

Çав ятпа республикăри композиторсен Союзĕ тата филармони Г. Лебедев çырнă произведенисенчен йĕркеленĕ концерт ирттерчĕç. Концертра Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ Сталинла премин лауреачĕ Ф. Лукин юлташ Г. Лебедев композитор музыка енĕпе тунă паха ĕçсем çинчен, унăн творчествăлла çулĕ çинчен каласа пачĕ.

Г. Лебедев произведенийĕсенчен йĕркеленĕ концерта филармони артисчĕсемпе уйрăм исполнительсем хутшăнчĕç. Курăнсем уйрăмах «Тăван çĕршыв», «Сталинград», «Ленин—Сталин партине мухтав» тата Т. Чумакова солисткă юрланă «Хĕрсен юрри», А. Казакова юрланă «Эпĕ тухрăм урама» юрăсене кăмăлласа йышăнчĕç.

Библиотекăсенче кĕнекесен шучĕ ÿсет

Шупашкарти профсоюз организацийĕсенче 15 библиотека, унта 110 пин кĕнеке ытла шутланать.

Библиотекăсенчи кĕнекесен шучĕ çулсерен нумайланать. Кăçал çĕнĕрен 18 пин кĕнеке ытла туяннă. Халĕ çак библиотекăсенче 9 пин вулакан ытла.

А. АЛЕКСЕЕВ.

Лайăх ĕçлекен промстрахсовет

Улатăрти «Красная звезда» промартельти страховой совет ĕçлекенсен пурнăçпа ĕç условийĕсене лайăхлатассишĕн куллен тăрăшать. Страхсовет хăйĕн укçипе 5 çынна санаторисене кайма путевкăсем илме пулăшнă. Артель членĕсен 5 ачи çулла пионерсен лагерĕсенче каннă. Кăçал артель членĕсене 2.371 тенкĕлĕх пулăшу панă.

Виççĕмĕш кварталти ĕç итогĕсем тăрăх, промартельти страховой совета Чăвашпромстрахсоветăн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне тата премин панă.

Н. АННЕНКОВ.

Чкаловски районĕнче

☆ Çĕнĕ библиотека. Район центрĕнче çĕнĕ çуртра вырнаçнă библиотека ĕçлеме тытăнчĕ. Унта вуламалли зал, ачасен библиотекин уйрăмĕ пур. Библиотекăна вулакансем кашни кунах йышлăн çÿреççĕ.

☆ Электростанци туяннă. Патăрьелĕнчи И. Я. Яковлев ячĕпе тăракан педагогика училищи «Киев» маркăллă электростанци туяннă.

Училищĕре вĕренекенсем электричество вăйĕпе усă курса, интереслĕ опытсемпе лабораторилле ĕçсем туса ирттереççĕ.

☆ Двигательпа ĕçлекен çăл. Мичурин ячĕпе тăракан колхозра фермăри ĕçсене çăмăллатас тесе тăрăшса ĕçлеççĕ. Кăçал кунта выльăхсене шăвармалли çăла насуспа ĕçлеттермелле тунă.

Л. ЛЯЛЬКИН.

ШУПАШКАРТИ СТАДИОНСЕНЧЕ

Иртнĕ вырсарникун Шупашкарти шкулсемпе техникумсенче тата институтсенче вĕренекен, фабрикăсемпе заводсенче тата учрежденисенче ĕçлекен çамрăксем ирех «Энергия» тата «Спартак» спорт обществисен стадионĕсене пухăнма пуçларĕç. Катоксем çинче конькипе ярăнакансен тата хоккеистсен ăмăртăвĕсем пулчĕç.

«Энергия» спорт обществи катокĕ çинче «Спартак» спорт обществипе Чапаевски поселок тата «Динамо» спорт обществипе «Энергия» спорт обществисен хоккей командисем юлташла тĕл пулса вылярĕç. «Спартак» спорт обществи каткĕнче конькипе ярăнакансем чылай пулчĕç.

Колхозниксем ĕнесем туянаççĕ

ЕЛЧĔК. КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ пулнă хыççăн чылай колхозниксем ĕне туянчĕç. Калинин ячĕпе тăракан колхозра 9 хуçалăха пăрусем туянма пулăшнă. Колхозниксене выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме пулăшас майпа выльăх апачĕ чылай валессĕ панă. Халăхне арпа, пăрçа улăмĕ тата улăм чылай валессе панă. Юлашки вăхăтра колхозра 15 хуçалăх ĕнесем тата пăрусем туяннă.

О. САЗОНОВ.

Пĕлтерни

Декабрĕн 16-мĕшĕнче, 19 сехетре, КПСС хула комитечĕн библиотека çуртĕнче хулари интеллигенципе докладчиксем тата агитаторсем валли лекци пулать. Лекци теми: «Çынсен ăс-тăнĕнчи капитализм юлашкисене пĕтересси—коммунизмла воспитанин пысăк задачи».

Лектор—П. В. Денисов юлташ.

* * *

Декабрĕн 16-мĕшĕнче, 19 сехетре, КПСС хула комитечĕн библиотека çуртĕнче парти историне вĕренмелли пĕрремĕш çул ĕçлекен кружоксен руководителĕсен семинарĕ пулать. Семинарта пăхса тухмалли тема: «Коммунистсен партийĕн тактикăлла никĕсĕсем».

Семинар руководителĕ—А. Э. Орлова юлташ.

КПСС ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ—декабрĕн 16-мĕшĕнче чăвашла спектакль «Аслати çулĕпе».

Спектакль 19 сехет те 30 минутра пуçланать.

КИНО

«УДАРНИК»—декабрĕн 16-мĕшĕнче Венгрире ÿкернĕ илемлĕ фильм «Потерянная мелодия».

Шупашкарти тата, республикăри экрансем çинче

„Завтрак у предводителя“

(И. С. Тургенев комедийĕ)

ятлă çĕнĕ илемлĕ фильм-спектакль кăтартма пуçлаççĕ.

Фильм-спектакле кинотеатрăн театр-студийĕ лартнă.
Спектакль режиссерĕ—Б. Лифанов.
Фильм режиссерĕ—А. Рыбаков.

Рольсене выляекан артистсем:
Г. Шпигель, М. Трояновский, А. Файт, А. Хвыля, Т. Барышева, А. Добровранов.

Ленин орденлă «Мосфильм» киностудийĕ 1953 çулта ÿкернĕ.

Хаçат-журнал çырăнса илĕр!

Шупашкарта пичетленсе тухакан çак хаçатсемпе журналсене 1954 çулта илсе тăма пур граждансем те çырăнса илме пултараççĕ.

„Коммунизм ялавĕ“, „Советская Чувашия“,
„Молодой коммунист“, „Çамрăк коммунист“,
„Агитатор блокночĕ“ (вырăсла тата чăвашла),
„Ялав“ журнал, „Тăван Атăл“ альманах.

Уйрăм çынсем «Союзпечать» уйрăмĕсенче тата почтăсенче çырăнса илме пултараççĕ. Çавăн пекех письмоносецсем граждансен килĕсенче, хаçат-журнал сарма уйăрнă çынсем фабрикăсемпе заводсенче, учрежденисенче, шкулсенче, колхозсемпе МТС-сенче подписка йышăнаççĕ.

Предприятисен, организацисен, шкулсен, культпросвет учрежденисен, колхозсемпе МТС-сен служба́ра усă курма тата пĕрле вуламалли вырăнсенче усă курма хаçатсемпе журналсем «Союзпечатĕн» районсемпе хуласенчи уйрăмĕсенче çырăнса илмелле.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—3-07, редактор заместителĕ—4-12, ответлă секретарь—4-28, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăçĕ пайĕ—3-90, ... пайĕ—6-64, пропаганда пайĕ—5-21, ... пайĕ—3-97, культура пайĕ—5-41, ... пайĕ—3-55, çырусен пайĕ—7-02, издательство конторĕ—0-23.

НТ 08078 Типографи № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Заказ № 5067. Тираж 20.000 экз.